Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1937 ДЕКАБĔР 28 ЫТЛАРИКУН 298 (4810)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

19-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Массăлă ĕçе вăйсăрлатмала мар, вăйлатса пымала

ССР Союзĕн Аслă Совет суйлав кампанийĕ масса хушшинче туса ыракан большевикла политикăла ĕçĕн выранĕпе пахалăхне вăйлăн кăтартса пачĕ.

Суйлавсем вăхăтĕнче пирĕн парти организацийĕсем хăйсен влиянине массă хушшинче шутсăр пысăккăн вăйлатрĕç, партире тăманнисемпе çыхăну тытассине çирĕплетсе нумайлатрĕç, хăйсен авторитетне татах та ытларах çĕклерĕç тата талантлă агитаторсен çĕнĕ кадрĕсене тупса палăртрĕç. Сăмахран, Сормоври парти организацинче суйлавччен пĕтĕмпе те 250 агитатор кăна пулнă, суйлав кампани вăхăтĕнче 1.172 агитатора çитнĕ, вĕсенчен 400 çынна яхăн—партире тăманнисем. Мускаври Сталинский районра çĕнĕрен 600 агитатор, Ленинский районра—1.000 çын палăртнă. Мĕлйун çурăна яхăн ĕçсыннисем—коммунисемпе партире тăманнисем—участкăсенчи тата округсенчи суйлав комисси членĕсем пулнă. Çĕршер пин агитаторсем—партирисемпе партире тăманнисем—участкăсенче калама çук пысăк тата ответлăран та ответлă политикăлă ĕç туса ынă.

Суйлавсем кадрсем йенчен „чухăн“ тесе пăвракан руководителсем нимĕн те тăманнине кăтартса пачĕç. Кĕске срук хушшинчех калама çук паха работниксем—партирисем те, партирĕ тăманнисем те—палăрса тухрĕç. Çав çынсем питĕ хаклă çынсем пулса тăнине ĕненес тесен, суйлав кампани вăхăтĕнче хăйсенче палăртнă агитаторсен кадрĕсем çине пăхсан та çителĕклĕ. Вĕсем революционерсен пĕтĕм хĕрÿлĕхĕпе большевикла сăмаха массă хушшине илсе пычĕç, ĕненмесĕр тăма май çук аргументсем тупрĕç. „Вĕсем тухса калаçни уçăмлăх, сĕткелĕх, хаклăх тĕлĕшпе, агитацин çĕнĕ формисемпе çĕнĕ меточĕсене суйласа илес тĕлĕшпе, темăсемпе содержанин пуянлăхĕпе тата сăмахсен формипе, вĕсенчен нумайĕшĕ чăнахах та, пирĕн хăшпĕр йаланхи, тĕсне çухатнă агитаторсене лисихххи хушшине хĕстерсе лартаççĕ“ (Жданов).

Парти организацийĕсем суйлав кампани кунĕсенчи политикăлă-массăлă ĕçĕн çÿлĕшне çирĕплетессипе тата ăна тарăнлатасси—пайанхи чи кирлĕ задачă.

Аслă Совета суйлани пур ĕçсыннисен те политикăлă пĕлÿсем патне туртăнас кăмăла, государствăн активлă çынĕсем пулма тăрăшас шухăша вăратрĕ, пирĕн çав туртăмсемпе шухăшсене пурнăçа кĕртсе ыма пулăшмала. Акă, сăмахран, Мускаври пĕр çуртра пурăнакан килхуçи хĕрарăмĕсем мĕн çыраççĕ „Правда“ хаçата:

„Халĕ пире, килхуçи хĕрарăмĕсене, çакăн пек ыйту хумхантарат: пирĕнпе агитатор малашне те ĕçлет-ши? Пирĕн çĕршывăн пурнăçĕ çав тери васкавлă, епĕр пур событине те курса ыма ĕлкĕрейместпĕр. Куратпăр пулсан, пур чухне те улшăнусемпе çитĕнÿсене тĕрĕс хаклама пултараймастпăр. Пире пурте интереслентерет: çĕршывăн çĕнтерÿвĕсем, йут патшалăхсенчи класлă тăвансен пурнăçĕ, Испани республикĕ интервентсемпе çапăçни, Китайри вăрçă тата ыттисем те. Епĕр парти организацине агитатора пирĕн патăртах хăварма ыйтатпăр. Вăл пирĕнпе малала та политикăлă ĕç тăвртчĕ“.

Ку сăмахсем питĕ тарăн шухăшлă. Пирĕн аслă çĕршывăн граждăнĕсем пурте политикăлă пурнăçа активлăн хутшăнма тăрăшаççĕ, ку—1937 çулхи декабĕрĕн 12-мĕшĕнче, суйлав кунĕнче палăрнă вăйлă çĕкленÿвĕн малали туртăмĕ пулса тăрат.

Большевикла агитацине татах та анлăрах сарса йамала, партире тăман çынсемпе татах та çирĕпрех, татах та чăрах çыхăнмала. Массăсемпе куллен, тĕплĕн ĕçлени—пирĕн парти организацисене пуйанлатат, вĕсен влийанийĕ халăхăн пур сийĕнче те йаланах пулса ыврассине вăйлатат. Малала тата çакна тăманмала мар, умра халĕ союзлă тата автономлă республикăсен Аслă Совечĕсемпе влаçăн выранти органĕсене суйласси тăрат. Массăлă ĕçе вăйсăрлатмала мар, вăйлатмала—акă мĕн кирлĕ пире хальь.

Çапах та çав хушăрах çак задачăсене ăнланман, суйлав итогĕсем вĕсене мĕн тумĕ хушнине ăнланман руководителсем те тупănaççĕ. Аслă Совета суйланине вĕсем кампани выранне çĕç хурса хаклаçĕç, малашнехи ваьььи нимĕнле уроксем те тумарĕç. Çакнашкал тухса тăраççĕ, тĕслĕхрен, Воронеж облаçне кĕрекен Гермйачинск районĕнчи парти организацин руководителĕ. Вĕсем пухса калаççĕ: „Пысăк ĕç туса ирттертĕмĕр, халь канма та йурат“. Канна май, вĕсем агитаторсене саланса йанă, кружоксен ĕçне пĕтерсе лартнă, —пĕр сăмахпа, хÿтлĕхе сывăрма выртрĕç. Пĕтерсе лартрĕç массăлă ĕçе Петрозаводскра та. Партин Петрозаводск хула комитечĕ те ыванна пулмала, ĕç хăйне-хăй пырасса шанса ларма пуçларĕ. Çакнашкал фактсем çинченех Калинин облаçĕнчен пĕлтереççĕ. Тĕслĕхрен, Старицкий районĕнче райком суйлав кампани вăхăтĕнче ĕçленĕ кулленхи политикă кружокĕсене пĕтĕмпех агротехникă кружокĕсем туса хумала тесе йышăннă (!). Çав решени Старицкри парти райкомĕ парти директивĕсене пăснине тата хăй деььагăла пăхнипе политикăлă пысăк ĕçе пĕтернине кăтартса парат.

Мĕн пур парти организацисене сарлакан ăнлантарса памала: суйлав участкисем халĕ тек ĕçлемеççĕ пулин те, пирĕн клубсем, хĕрлĕ кĕтессем, çуртсем, квартирсем йулнă, вĕсенче пуçтарăнаççĕ тата пурăнаççĕ ĕçсыннисем, унта большевикла сăмаха чĕререн кĕтсе тăраççĕ, унта пирĕн агитаторсемпе пропагандиссем пулмала. Çавăнпа массăлă-политикăлă ĕçĕн çитĕнÿвĕсене çирĕплетсе хăварас текен, кулленхи политикăна вĕренмели кружоксен системине çыхласа хăваракан тата агитаторсене, вĕсем суйлав вăхăтĕнче мĕнле участкăсенче ĕçленĕ савăнтах çирĕплетсе хăваракан парти организацисен пуçарувĕсене пур йенчен те ырласа çĕклесе ыма кирлĕ. Çапла турĕ, сăмахран, „Красный ткач“ фабрикăри парти организацийĕ (Ленинград). Фабрикă йĕри-тавра рабочисемпе работницăсем тата вĕсен семйисен членĕсем 3 пин çын патнелле пурăнакан çуртсем ларса тухнă. Мĕн пур агитаторсем хăйсен ĕçне малала туса пыраççĕ. Вĕсене лайăх пĕлеççĕ, хаклаççĕ: „Пирĕн агитаторсем!“ теççĕ вĕсене йуратса, вĕсем патне пулăшу, канаш ыйтма пыраççĕ.

Пурнăç массăлă ĕçĕн формисене те кăтартса парат. Вĕсем—политкун, кулленхи политикăна вĕренмели кружок, хаçатсем вулани тата ăнлантарса пани, пĕрпĕр ыйтупа калаçусем ирттерни тата ыттисем те. Шаблон, агитаци ĕçĕнче ниçтинчен ытларах сийенлĕ. Агитаци витĕмлĕхĕ агитаторсем хатĕрленнинчен килни палла. Çапла вара хăйсен ĕçне завод йе учрежденин тулашĕнче туса пыракан агитаторсем валььи йатарласах семинарсем организацилессишĕн тăрăшмала, вĕсене квалификацилĕ консультаци, литературă, наглăднăй пособисем кирлĕ. Парткабинетсенче, вĕсен вырăнĕ халĕ пысăккăн ÿссе пырат, агитаторсене ĕçе хатĕрленме майсем туса памала.

Пирĕн парти вăйĕ—вăл партире тăманнисемпе таччăн тата таталмасăр çыхăнса тăнинче, тесе вĕрентет пире Сталин йулташ. Массă хушшинче политикăла ĕçе анлăн сарса, епĕр çав çыхăнува тата темиçе хут вăйлататпăр, активăн çĕнĕ сийĕсене çĕклетпĕр, коммуниссемпе партире тăманнисен историлĕ сталинла блок çĕнтерÿне çирĕплететпĕр.

Тунă ĕçе организацилĕ çирĕплетмеле, пĕтĕм ĕç çавăнта. Çакă, чи малтанах—тĕплĕн шута илнине тата агитаторсемпе пропагандиссене суйласа илмелине, вĕсене тĕплĕн тĕрĕслемелине, парти организацийĕсем йенчен ĕçе йаланах тĕрĕслесе пымалине пĕлтерет. Агитаторсене кулленех йертсе пырсан, вĕсене пулăшсан, çитменлĕхсене асăрхаттарсан тин массăлă агитаци хăйĕн сийĕсене парат. Агитаци пахалăхĕ, унăн политикăлă çивĕчлĕхĕ, большевикла идейлăхĕ, килĕшменлĕхĕ—акă мĕн тухса тăрат пĕррремĕш плана.

Халĕ çак тапхăрта, пуринчен ытла мĕн çине çаварăнса пăхмала? Пирĕн агитаторсем суйлавсен политикăлă итогĕсене, коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕн чаплă çĕнтерÿне, Ленин—Сталин партийĕн çĕнтерÿне лайăх ăнлантарса памала, Сталин йултап Сталинский округри суйлавçăсем умĕнче каланă сăмахне тата, тата тепĕр хут ăнлантарса памала, тĕнчери лару-тăру çинчен ăнлантарса памала. Умра—Аслă Совет сессийĕ, стахановла рекордсен сталинла уйăхлăхĕ, Хĕрлĕ Çар 20 çул тултарни, йулашкинчен, çуракине хĕрÿлĕн хатĕрленмели вăхăт. Пĕтĕм ыйтусенчен чи кирлине, чи татăклине, пĕтĕм ĕçсыннисене хумхатакан ыйтува суйласа илмеле.

(„**Правда**“ умстаттийи, декабĕрĕн 27-мĕш).

Совет Союзĕ тăрăх

** РСФСР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ 1937 çулта отлично ĕçленĕшĕн 53 чи лайăх стахановец-тракториссене, комбайнерсене, трактор отрйачĕсен бригадирĕсене тата çĕрулми пухса кĕртекен машинăсемпе ĕçлекенсене преми панă.

** Курск облаçĕнче декабĕрĕн иккĕмĕш çур уйăх пуçламĕшĕнче 23-мĕш числаччен нихăçан пулман ăшă çанталăк тăнă. Кăнтăр йенчи районсенче температурă 8 градус таран ăшă пулнă. Волоконовск районĕнче хăшпĕр колхозсем пахчасенче çĕртме сухаланă.

** Ленинград облаçĕнче хальхи вăхăтра колхоз клубĕсемпе вулав сурчĕсенче тата хĕрлĕ кĕтессенче 35 пине йахăн трансльацилĕ радиоточкăсем пур. Кашни районрах радиоузел пур, облаçра вĕсем—110.

(ТАСС).

ССР Союзĕн Йутçĕршывĕ халăх комиссарĕ Максим Максимович Литвинов—Петроградски суйлав округĕ тăрăх Союз Советне депутата суйланă (Ленинград хули).
(Союзфото).

Франци компартин сйесĕ

Декабĕрĕн 25-мĕшĕнче, Францин кăнтăр йенчи Арль йатлă пĕчĕк хулинче, Франци компартин 9-мĕш сйесĕ уçăлнă.

Сйесăн кун йĕркинче çакăн пек ыйтусем тăраççĕ: 1) Халăх фрончĕн Францийĕ тата унăн пĕтĕм тĕнчери задачисем (докладчик Торез); 2) Раскола пĕтересси тата рабочи класăн пĕрлĕхĕ (докладчик Дюкло); 3) Халăх фрончĕ тата Францири хресчĕнсем (докладчик Рено Жан); 4) Коммуниссен аслă çемйи (докладчик Життон).

Сйесăн хисеплĕ президиумне Сталин, Димитров, Мануильский, Тельман, Хозе Диас йулташсене суйланă.

Декабĕрĕн 26 мĕшĕнче сйес парти Тĕпкомĕн генеральнăй секретарĕ Морис Торез тунă доклада итленĕ.

Торез, хăйĕн докладне Францири фашисăма хирĕçле халăх фрончĕ тунă çитĕнÿсене пăхса тухнинчен пуçласа, социаллă законодателства пурнăçа кĕрсе пыни çине, ĕçукçи тÿлесех отпуск пани, економикă чĕрĕлни т. ыт. çине кăтартса панă. Фашисăма хирĕçле халăх фрончĕ ĕçленине пула Францири ĕçсынни массисен пурнăç условийĕсем чылай лайăхланчĕç, тесе палăртнă Торез.

ССР Союзĕнчи ĕçсыннисен пурнăçĕ çинчен чарăнса тăрса, Торез социалисăм çĕнтернĕ çĕршыври ĕçсыннисен çитĕнÿвĕсем çинчен каласа кăтартнă. „Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче ССР Союзĕн Аслă Советне суйлани,—тенĕ Торез,—çĕнĕ Сталинла Конституци тăрăх ирттернĕ пĕрремĕш суйлав пулса тăрат; вăл суйлав тĕнчере чи ирĕклĕ тата чи демократилĕ суйлав пулса тăрат“.

Унтан Торез фашисăм çĕршывсенчи, уйрăмăн илсен, Гитлер Германинчи, ĕçсынни массисен пурнăç условийĕсем калама çук йăварри çинчен каласа парат.

Хăйĕн сăмахĕсене пурнăçран илнĕ пуйан материалсемпе çирĕплетсе, Торез çапла калат: Гитлер режимĕ рабочи класа, ĕçсыннисен массисене вĕçĕмсĕр хĕссе тăрат. Гитлер режимĕ массăсен пурнăç условийĕсене ыйткаласа çÿрекен çын пурнăçĕн картне антарса лартрĕ. 1933 çултан пуçласа пайанхи куна çитиччен Гитлер Германинчи рабочисен ĕçукçи 25—40 процент чакнă. 1933 çулта, урăхла каласан, фашиссем влаçа хăйсен аллине йарса илнĕ хыççăн темиçе уйăхран, ĕççĕрлĕх пирки паракан пособи ернере 24 маркă пулнă пулсан, хальхи вăхăтра Германири рабочин ерне хушшинчи вăтам ĕçукçи 30 маркăран та иртмест.

Малала Торез „Моя борьба“ кĕнекерен уйрăм цитатăсем вуласа парат, вăл кĕнекере Гитлер Франци демократийĕ çинчен елек сарат. Францири фашисăма хирĕçле халăх фрончĕ,—тет Торез,—демократине вăйлатма пулăшат; акă мĕншĕн фашисăм Франци демократийĕ çине тапăнат. Муссолини „Йевропă ыран фашисла Йевропă пулат“ тесе хăратнине хирĕç ответлесе, Торез татăклă та çирĕп ответ парат: „çук, пулмаст вăл“.

Торез Испани ĕçне хутшăнмала мар тесе калакан политикăна критиклет, республикăлă Испанине блокадă тăвассине чарса лартассишĕн, Францире республикăлă Испани хушшинчи чикĕне уçассишĕн тата Францире Испани пăлхавçисем йышăнса илнĕ территори хушшинчи чикĕне хупса лартассишĕн Франци коммунисĕсем ку таринчен те кĕрешнĕ, малашне кĕрешĕç, тесе калат.

Францире тупса палăртнă заговора фашисла организацисем, Гитлерпа Итали фашисĕмĕн Францири агенчĕсем организациленĕ, тесе кăтартнă Торез, тата Францире халь те пурăнакан фашисла лигăсене салатса йама ыйтнă.

Малала Торез Францири коммунисла партин ÿсĕмĕ çинчен калат, хальхи вăхăтра парти членĕсен хисепĕ 341 пин çынна çитет, комсомолецсен хисепĕ — 90 пин çынна, „Францири хĕрсен союзĕн“ членĕсем — 19 пин çынна çитет, тесе палăртат.

Францири кашни коммунис Ленин—Сталин вĕрентĕвне алла çавăрса илме тивĕç тата, вăл вĕрентĕве сарма тивĕç, тесе паллă тăват Торез. Совет Союзĕ,—тенĕ вăл,—социалисăма пурнăçа кĕртнин чĕрĕ примерĕ пулса тăрат. Ленинпа Сталин ĕнерхи социалисăмла ĕмĕте пайанхи чăн пурнăç туса хучĕç. „Коммунисла партин сйесĕ,—тесе пĕтерет хăйĕн докладне Торез,—малала коммунисăм патне, пулас лайăх пурнăç патне, халăхсен телейĕ патне кайма çĕнĕ утăм тăвĕ“.

Франци компартин сйесĕ тăвăлла оваци туса Сталин йулташ патне саламлă телеграмма йама йышăнат.

(ТАСС).

Испанири Итали колонизацийĕ

Франци пичечĕ тăрăх, Итали влаçĕсем Испани пăлхавçисем тытса илнĕ Испани территорине колонизацилеме пуçланă та ĕнтĕ. Темиçе кун кайала Гибралтара 20 Итали çемйи аннă, вĕсене пĕр тăхтамасăрах пăлхавçăсен аллинче тăракан Испани районĕсене йанă.

(ТАСС).

Канаш районĕ йалхуçалăх ĕçĕсене маннă

КАНАШ. Парти Обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937-мĕш çулхи декабĕрĕн 1-мĕшĕнче „Колхозсенче тырпулсемпе тупăшсене валеçесси çинчен“ йышăннă постановлени тăрăх, тырпулсемпе тупăшсене 1937-мĕш çулхи декабĕрĕн 20-мĕшне валеçсе пĕтермеле, декабĕрĕн 10-мĕшне авăн çапса пĕтермеле пулнă. Çак решенине Канаш районĕнчи колхозсем пурнăçа кĕртмен.

Районри 47 колхозран 21 колхозра çеç авăн çапса пĕтернĕ. Пĕр колхозра та тырпулпа тупăшсене валеçсе пама тытăнман. Район тырпул хатĕрлев планне—колхозсем тăрăх 97 процент, йединоличниксен хуçалăхĕ тăрăх 89 процент кăна тултарнă. Натурплатă тыррине 76 процент çеç тÿлесе татнă. Çавăн пекех, колхозсенче страховкăпа вăрлăх фончĕсене те хывса çитермен. Суртлă вăрлăхпа улăштармали тырăсене улăштарма та тытăнман. Чылай колхозсенче вăрлăх пахалăхĕшĕн тăрăшмаççĕ. Вăрлăх тасатас ĕçе пĕр колхозра та пуçăнман. Пĕлтĕрхи хисеп тăрăх, МТС станцине кĕрекен колхозсенче 18 триер пулмала, çав триерсем халь ăçта ларнине, вĕсем йусавлипе йусавлă маррине МТС пĕлмест.

МТС станци колхозсемпе тунă договора пурнăçлама пачах шутламаст. Колхозсене авăн çапма тесе илсе кайнă тракторсемпе молотилкăсем пурте пекех йусавсăр лараççĕ. МТ Станцин тракторисĕсемпе машинисĕсем пĕри те колхозра çук, тарса пĕтнĕ. Хăшпĕр колхозсенче тата трактора йури пăсса авăна хăварт çапса пуçтарма чăрмантараççĕ. Акă, Аччари „Хĕрлĕ çар“ колхозра (председател Медведев) декабĕрĕн 24-мĕшĕнче талăкĕпех трактор лайăх ĕçленĕ. Ыран пасар тенĕ чухне, каçхи кÿлĕмре трактора вут тивсе илчĕ тесе шыв сапаççĕ те пăрлантарса лартаççĕ. Хăйсем кунĕпех пасарта сулланса çÿренĕ.

Çак çÿлте кăтартса панă тĕслĕхсем Канаш районĕнчи партипе совет, çĕрĕç организацисен руководителĕсем 1938-мĕш çулхи çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе ним тумасăр ларнине уççăнах кăтартса парат.

Районри партипе совет организацисем ССР Союзĕн Аслă Советне суйланă чухнехи политикăла çĕкленÿпе усă курса колхозниксене 1938-мĕш çулхи çуракине хатĕрленес ĕçе мобилизацилеме пултарайман.

Районра йединоличниксене çуракине хатĕрлес ĕçе пачах хакламан, вĕсене колхоза кĕртес тĕлĕшпе ĕçлемен. Çавна пула Канаш районĕ йединоличник хуçалăхĕсене колхоза кĕртессипе ытти районсенчен чылай кайра пырат. Йединоличник хуçалăхĕсем çине тăшмансем çине пăхнă пек пăхнă. Кирек мĕнле ĕç тăвас пулсан йединоличниксене йаланах колхозниксенчен уйăрма хăтланнă. Кунта Сталин йулташ пайанхи йединоличник ыранхи колхозник, тесе каланине маннă.

Йалхуçалăх ĕçĕсем çакăн пек йапăхса кайасси пурте районти партипе совет руководителĕсен (Майоров, Федотов, Алексейев, Бугров, Шадрин) куçĕ умĕнче пулса пынă. Вĕсем района çакăн пек лару-тăру патне çитерсе тăратнă.

Райĕçтăвком председателĕ пулнă Федотов, унăн заместителĕ Кузьмин, хатĕрлев комитечĕн районри уполномоченнăйĕ пулнă Бугров партипе правителствă решенисене пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пыман. Йалхуçалăх ĕçĕсене йертсе пыман. Парти райкомĕ çак йертсе пыракан работниксенчен хăйсем çине хунă ĕçсемшĕн татăклă ответ тытас выранне, вĕсене, шахматла йĕркепе вырнаçтарса тухат. Федотова — райĕçтăвком председателĕнчен хăтарса парти райкомĕн иккĕмĕш секретарĕ тунă. Бугрова—хатĕрлев комитечĕн районри уполномоченнăйĕнчен хăтарса райĕçтăвком председателне лартнă. Кузьмина—райĕçтăвком председателĕн заместителĕнчен кăларса хатĕрлев комитечĕн районри уполномоченнăйĕ тунă. Йачĕсене улăштарнă, анчах руководствăри çынсем малтанхи пекех, нимĕн улшăнмасăр йулнă. Çавăн пекех районри ĕçсем те, промышленнăç йенĕпе те, йалхуçалăх йенĕпе те çав çавах улшăнмасăр йулнă.

Декабĕрĕн 25-мĕшĕнче парторганизацин районри пухувĕ пулса иртрĕ. Пуху Федотов, Бугров, Соловйов (парти райком бÿро членĕ), Шадрин (МТС директорĕ) йулташсем пирки, вĕсем малашне те район руководствинче йулма пултарассипе пултарас çукки çинчен парти райкомĕн çитес пленумĕнче пăхса тухма хушса хăварчĕ.

Райком пленумĕн йалхуçалăх ĕçĕсене йертсе пырас йенĕпе татăклă улшăнусем тума май паракан решенисем йышăнмала. Пленумăн, чăн малтан, районри руководствăна тĕреклетни урлă, пур колхозсенчен те халех тупăшсене ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе пĕтермеле, тÿрĕ йединоличниксене колхоза кĕме пулăшмала, çуракине большевикла хатĕрленсе ирттермеле, налог политикине пăсса пĕтернисене тÿрлетсе çитермеле тăвас пулат.

А. Григорйев.

Стахановла рекордсен сталинла уйăхне кĕтсе илме хатĕрленни

Промышленнăç предприйатисен коллективĕсем стахановла рекордсен сталинла уйăхне пысăк хавхаланупа хатĕрленеççĕ. Предприйатисенчи стахановецсем çÿлĕ ĕçтухăçлăхĕн çĕнĕ тĕслĕхĕсене кăтартаççĕ, продукци туса кăларассине ÿстереççĕ.

Мариупольри Илйич йачĕпе тăракан металлурги заводĕнче çĕршывăн паллă сталеварĕ Макар Мазай кашни кун пĕр тăваткал метр кăмака тĕпĕнчен вуникĕ тоннă хурçă шăратса кăларма пулнă. Ĕçре вăл 13 тоннăшар тата ытларах та шăратса кăларат. Декабĕрĕн 24-мĕшĕнче заводăн иккĕмĕш мартен цехĕнче вăл кун ĕçленĕ 15 сталевартан 13 кăмакасен техникăла пултарулăхĕнчен ирттерсе ĕçленĕ.

Донбасри „Лисичанскуголь“ трестчĕн Войков йачĕпе тăракан шахтинчи 26 горньак декабĕрĕн 24-мĕшĕнче кашнийех виçшер нормă тата ытларах та тултарнă. Забойщик Стрельцов йулташ нормăна 1.050 процент тултарнă.

Карагандăри ултă шахтă кăмрăка çулталăкри планран ытлашши параççĕ ĕнтĕ. Горький йачĕпе тăракан малта пыракан шахтă горньакĕсем, çулталăкри заданийе пурнăçа кĕртсе, планран ытлашши 300 пин те 500 тоннă кăмрăк кăларма пулнă.

Бакури тата Батумири нефт заводĕсем çулталăкри плана срукчеех тултарнă. Вĕсем çулталăкри планран ирттерсе 127 пин тоннă çутă нефт тата 70 пин тоннă технически çу панă.

Илйич йачĕпе тăракан рудникăн 5 №-лĕ шахтин паллă бурильщикĕ Винничук йулташ стахановла рекордсен сталинла уйăхне хатĕрленсе чаплă рекорд тунă: декабĕрĕн 24-мĕшĕнче вăл планпа 22 тоннă руда шăратас выранне, 400 тоннă шăратса хăйĕн сменăри заданине 1.800 проц. тултарнă.

(ТАСС).

Китай троцкисĕсем Йапони штабĕн службинче

Циндаора (Шаньдун провинцинчи промышленнăçлă пысăк хула) Йапони штабĕ тунă диверсантсен пысăк ушкăнне тупса палăртнă. Декабĕрĕн 20-мĕшĕнче çав ушкăнăн диверсанчĕсем провокаци тăвас майпа йапонецсен аллинче тăракан пурăнмали çуртсене темиçе çурта вут тĕртнĕ. Çак ĕç тăрăх 200 çын ытла арĕсленĕ. Арĕсленисенчен 14 çынне персе пăрахнă. Йапони штабĕ йĕркеленĕ диверсантсен хĕçпăшаллă отрйадĕнче Китай троцкисĕсем тăраççĕ.

Кантонран пĕлтернĕ тăрăх, Йапони разведкин службинчи тăракан троцкиссем, нумай пулмаст Гуандунпа Гуанси провинцинчи троцкиссем патне „Нанкин правителствине хирĕç активла кĕрешме çурçĕре тухма“ директивă йанă. Гуанси провинцинчи троцкиссен ушкăнĕ пĕтĕмĕшлĕ çар повиннăçĕ çинчен саккун тунине хирĕç тата пĕтĕмĕшлĕ мобилизацишĕн анлăн саралнă кампанийе хирĕç тухат. Троцкиссем хăйсен провокацилĕ ĕçне Гуандунпа Гуанси çарĕсене фронта йарассине хирĕç тăваççĕ.

(ТАСС).

Фермӑ пысӑк тупӑш парать

Кӗтеснерти „15-й партс'езд" колхоз (Вӑрмар р.) 1930-мӗш ҫулта 6 ӗнепе ферма организациленӗ. Ун чухне ӗнесене хупма вите те пулман. Халӗ фермӑра ӗнесен шучӗ 126 пуҫа ҫитрӗ. Сӑваканнисем 52 ӗне, производителсем 4. Ӑшӑ витесем пурӗ виҫҫӗ. Аллӑ пӑру вырнаҫмалӑх ӑшӑ вите пур. Сӗтсем тыткалама, сӗтрен ҫу уйӑрма, улӑм пӗҫерме тата йӳҫӗтме уйрӑм ҫуртсем лартса панӑ.

Ӗнесем вальли ҫителӗклӗ апат хатӗрлесе хунӑ. Ӗнесене талӑкра тӑватӑ хутчен тӑрантараҫҫӗ. Талӑкра вӑтамран кашни ӗнене йӳҫӗтнӗ апат 2 килограм, тымар ҫимӗҫ 5 кило, ҫиснӗ улӑм 10 килограм, шмых 450 грам ҫитереҫҫӗ. Сӗт ытларах паракан ӗнесене нормине ӳстерсе ҫитереҫҫӗ. Кунне виҫӗ хут шӑвараҫҫӗ. Икӗ сехет хушши уҫӑлтарма кӑлараҫҫӗ. Рекордисткӑ „Ракет" талӑкра 24 литр сӗт парать. „Мушкӑ" талӑкра 18 литр сӗт парать.

Фермӑ заведуйушчи Анфиса Волкова ӗнесене лайӑх пӑхса, фермӑран пысӑк тупӑш илессишӗн пӗтӗм чунтан тӑрӑшса ӗҫлет. Фермӑра ӗҫлеме пуҫланӑранпа 6 хутчен преми, ударлӑ грамӑта илнӗ. Кӑҫал чи лайӑх ӗнесене „Ракет" тата „Мушкӑ" рекордисткӑсене районри выставкӑна тӑратса преми илчӗҫ.

Антон Андрейев 64 ҫула ҫитнӗ старик мӗн фермӑ пуҫланнӑранпах фермӑра ӗҫлет. Вӑл ӗнесене йаланах вӑхӑтра тӑрантарать, вӑхӑтра шӑварать. Витене таса тытать. Ӗҫре тӑрӑшса ӗҫленӗшӗн ӑна виҫӗ хутчен премиленӗ, ударлӑ грамӑта панӑ. Кашни ҫулах фермӑра 500 ӗҫкунӗнчен кайа мар тӑвать.

Фермӑ ҫулран ҫул пысӑк тупӑш парать. 1936-мӗш ҫулта 26 пин тенкӗ тупӑш панӑ. Кӑҫал 30 пин те 926 тенкӗ таса тупӑш панӑ. Вӑл шутран сӗт-ҫу 21 пин те 552 тенкӗлӗх сутнӑ. Ӗнесемпе пӑрусене 9 пин те 374 тенкӗлӗх сутнӑ.

Ӗнесӗр хуҫалӑхсене 23 ӗне туйантарнӑ. Колхоз пысӑк тупӑш илнине пула кӑҫал 40 лаша вырнаҫмалӑх лаша вити, 200 вӗлле вырнаҫмалӑх омшанник, 2 пин тенкӗ тӑракан шыв тытмали чан туса лартнӑ. Виҫӗ пин ҫурӑ парса нефтодвигател туйаннӑ. Ултӑ ҫӗр тӗп улмуҫҫи туйанса 6 гектар ҫӗр ҫине лартса хӑварнӑ. 1938 ҫулта фермӑран 35 пин тенкӗ тупӑш илме шутлаҫҫӗ.

Ваҫ. Вишневски.

Ҫӗрӗҫ пайӗ оперативлӑ йертсе пыма тытӑнман-ха

ЙЕТӖРНЕ. Районри колхозсем кӑҫалхи йалхуҫалӑх ӗҫӗсене лайӑх вӗҫленипе халӗ сталинла виҫҫӗмӗш пйатилеткӑн пӗрремӗш ҫулхи большевикла ҫуракине хатӗрленеҫҫӗ.

Мӑн Йӗкӗтри „Хӗрлӗ Октябӗр" колхоз ҫуракине хатӗрленес ӗҫе тивӗҫлипе пуҫарса йанӑ. Кунта халӗ тислӗк, ҫӗре ҫемҫетмели тӗрлӗрен имҫамсем, минераллӑ удобренисем уйа кӑлараҫҫӗ. Пайанхи куна „Хӗрлӗ Октябӗр" колхоз 1400 лав тислӗк, 97 йичке навус шывӗ уйа кӑларнӑ. — 1938 ҫулта пирӗн кӑҫалхинчен те ытларах вӑйлӑ тырпул туса илмеле. Ҫакӑншӑн тӑрӑшатпӑр та ӗнтӗ епӗр, — теҫҫӗ колхозниксем.

Вӑрлӑха ҫителӗклӗ таран суртласа хурса, йалхуҫалӑх машинисене тасатса йӗркене кӳртнӗ. Анчах ҫуракине тивӗҫлипе хатӗрленнӗ колхозсем районра сахал-ха. Кӑташ йалсоветне кӗрекен „Хӗрлӗ ҫӑлтӑр" колхозра ҫуракине хатӗрленме аса та илмеҫҫӗ. Вӑрлӑха суртлас, вӑл миҫе процент таран шӑтса тухнине тӗрӗслес, йалхуҫалӑх машинисене йусас, йур тытас тата ыт. ӗҫсене тума ку таранччен те тытӑнман. Уйа навус кӑларасси ҫинчен те шухӑламаҫҫӗ-ха. Йалхуҫалӑх машинисем унта-кунта сапаланса выртаҫҫӗ.

Ҫавӑн пекех Кӑташри „Пионер", Иваньккӑвӑри „Путь к социализму" т. ыт. колхозсенче те ҫуракине хатӗрленме тытӑнман-ха.

Колхозсенче вӑрлӑха сыхлас ӗҫ те йапӑх пырать. Нумай колхозсенче вӑрлӑх усрамали ҫуртсем те ҫук.

Ҫуракине хатӗрленес ӗҫпе райҫӗрӗҫ пайӗ пачах интересленмест, колхозсемпе оперативлӑ йертсе пымасть.

Ник. Цветков.

Стахановла рекордсен сталинла уйӑхлӑхӗ умӗн

Ҫӗмӗрле комбиначӗ Куславкка комбинатне ӑмӑртӑва чӗнет

ҪӖМӖРЛЕ. Пайан декабӗрӗн 27-мӗшӗнче предприйатисенчи стахановецсен районри канашлувӗ пухӑнать. Канашлура 400 стахановец йахӑн пулмала.

Ӗнер комбинатри стахановецсен канашлувӗ пулса иртрӗ. Канашлура комбинат директорӗ Шаликов йулташ 1937 ҫулхи ӗҫсемпе 1938 ҫулта комбинат умӗнче тӑракан задачӑсем ҫинчен доклад туса пачӗ.

Комбинат декабӗрӗн 25-мӗшне 11.220 пин тенкӗлӗх продукци туса кӑларса ҫулталӑк планне 97,4 процент тултарчӗ. Цехсем тӑрӑх илсен, столӑрнӑй цех ҫеҫ хӑйӗн планне тултарнӑ. Ӗҫ тухӑҫлӑхне хӑпартассипе те комбинат плана тултараймӑн.

Комбинат кӑҫал ҫителӗксӗр ӗҫлени пӗтӗмпех материалсем ҫителӗклӗ тӑратманнинчен килнӗ. Вӑтамӑн шутласан, ҫак 11 уйӑх хушшинче материал пулманнипе станоксем 15 процент ахаль тӑнӑ т. ыт. те.

Пухура тухса калаҫакансем пурте пекех материал ҫителӗксӗр тӑратни ҫинчен, ку тӗлӗшпе коммерческипе снабжени пайӗсем начар ӗҫлени ҫинчен кӑтартса пачӗҫ. 1938 ҫулта комбинатӑн 1937 ҫулхи планран 13 процент ытларах продукци туса кӑлармала. Кашни цехӑн продукци кӑларассипе план ӳсмелӗ. Стахановецсем куна хапӑлласах йышӑнчӗҫ.

— Епӗр 1938 ҫулхи плана ҫӑмӑллӑнах нойабӗрӗн 1-мӗш тӗлне тултарма пултаратпӑр, — терӗ столярнӑй цехри стахановец Федотов йулташ.

Пухура йышӑннӑ резолюцире ҫапла каланӑ:

„Епӗр комбинатри стахановецсем 1938 ҫулхи плана пысӑк хавасләхпа кӗтсе илтӗмӗр. Стахановла йухӑма татах та анлӑн сарса пырса, промфинплана срукчӗнех тултарма пултатпӑр".

Пуху пӗр сасӑпах 1938 ҫулхи йанвар уйӑхне стахановла рекордсен сталинла уйӑхлӑхӗ туса ӗҫлеме йышӑнчӗ. Социалисӑмла ӑмӑртӑва Куславкка комбинатне чӗнчӗҫ.

Х. Лисин.

Колхозниксем 400-шер пӑт илчӗҫ

ВӐРНАР. Тӗмпекри Ворошилов йачӗпе тӑракан колхоз кӑҫал агротехникӑна лайӑх пурнӑҫласа пынипе тата минераллӑ удобренисемпе тӗрӗс уса курнипе халиччен курман вӑйлӑ тырпул туса илчӗ. Кашни гектартан вӑтам шутпа 150 пӑт, уйрӑм гектарсем ҫинче 200-шер пӑт тӗш тырӑ туса илнӗ.

Кӑҫал кашни ӗҫкунӗ пуҫне ҫур пӑта йахӑн тӗш тырӑ валеҫрӗҫ. Колхозра тӑрӑшса ӗҫленӗ колхозниксен амбарӗсем тӗш тырӑпа тулса ларчӗҫ. Акӑ: Семенов, Криков, Алексейев колхозниксен семйисем кашни йех 400-шер пӑт тӗш тырӑ илчӗҫ.

Ҫавӑн пекех Елмен Сунарӗнчи Каганович йачӗпе тӑракан колхозра та кашни ӗҫкунӗ пуҫне ҫур пӑта йахӑн тӗш тырӑ тивет. Антонов Михаил стахановец семйи 1000 ӗҫкунӗ тунӑ. Вӗсем уншӑн 420 пӑт тӗш тырӑ илчӗҫ.

Н. Козлов.

Тупӑшсене валеҫеҫҫӗ

Кӗҫӗн-Чуллӑри (Трак р.) „Победа" колхозра кӑҫалхи ҫул вӑтамран гектар пуҫне 120—130 пӑт тӗштырӑ туса илчӗҫ. Кашни ӗҫкунӗ пуҫне ҫуршар пӑт тӗш тырӑ тивет. Ӗлӗкхи патша саманинче чухӑн хуҫалӑхра 50—60 пӑт тырӑ туса илнӗ хресченсем С. Тимофейевпа С. Илйин—400-шер пӑт тӗш тырӑ, 200—250 пӑтшар ҫӗрулми тата пахча-ҫимӗҫсем те илеҫҫӗ.

— Ӗлӗк епер кун пек 400 пӑт тырӑ тӗлӗкре те курма ӗмӗтленмен, — тет Илйин, — тар тухаччен ӗҫлесен те ҫав хыт тӗмеске тӑрринчи ана ҫинчен 50—60 пӑт кусҫулӗпе туса илнӗ, уншӑн та ҫуррине куланайшӑн шӑлса кайнӑ. Халӗ епӗ пуйан та культурлӑ пурнӑҫпа ҫителӗклӗ пурнатӑп, ӗне, сурӑхсем, сыснасем, чӑх-чӗпсем ҫителӗклӗ. Килте таса та культурлӑ, хаҫат-журнал сыранса илсе, пӗр номӗр сиктермесӗр вуласа пыратӑп. Тав манран халӑхӑн ҫулпуҫне Аслӑ Сталин йулташа, пире телейлӗ те культурлӑ, савӑнӑҫлӑ пуйан пурнӑҫ туса панӑшӑн, тет. Савӑнаҫҫӗ колхозниксем; кӑҫал 100 пӑтран кайа илекен ҫук пирӗн колхозра, теҫҫӗ.

А. Семенов.

Кайа йулса пыма нимӗнле сӑлтав та ҫук

ПАТӐРЙЕЛ (телефонпа хамӑр корр.). Районри колхозсем кӑҫал вӑтам шутпа гектартан 20 центнершер тырӑ туса илчӗҫ. Уйрӑм колхозсем „Ҫӑлтӑр"—22,26 центнер, „Хӗрлӗ туҫа"—24 центнер, „РОКК"—24 центнершер тӗштырӑ вӑтам шутпа туса илнӗ. Иртнӗ ҫулта вӑтам шутпа ӗҫкунӗ ҫине 1—1.5 килограм илнӗ пулсан, кӑҫал пур колхозсенче те тенӗ пекех 9—10 килограмшар тӗштырӑ тата ытти ҫимӗҫсене те нумай илеҫҫӗ.

Анчах районта хӑшпӗр колхозсенче ӑнса пулнӑ тырра ӗҫкунӗсем тӑрӑх валеҫес ӗҫре, пысӑк чӑрмавсем пулса пыраҫҫӗ. „Красноармейец", „Ленин ҫулӗ", „Хӗрлӗ йалав", „Большевик" тата Сталин йулташ йачӗпе тӑракан колхозсенче пайанхи куна ҫитсе те авӑн ҫапса пӗтермен. „Ленин ҫулӗпе" колхозра 50 процентне ҫеҫ ҫапнӑ. Авӑн ҫапасси нумайа тӑсӑлни ҫак асӑннӑ колхозсем МТС ҫине шанса ларнинчен те нумай килчӗ. Анчах МТС-ӑн тракторӗсем октябӗр уйӑхӗнче ахалех, нимӗн ӗҫлемесӗрех ларчӗҫ. „Красноармейец" колхозра тракториссем ҫук пирки тракторсем авӑн ҫапас вӑхӑтра 7 кун ӗҫлемесӗр тата 2 кун ҫӗмӗрӗлнипе ларчӗҫ.

Районри хӑшпӗр колхозсенче авӑн ҫапасси, тупӑшсене валеҫесси вӑрӑма тӑсӑлни райӗҫтӑвком председателӗ пулнӑ Степановӑн сийенлӗ кӑтартӑвӗнчен те нумай килнӗ. Вӑл колхозсене 1937 ҫулта ӗҫленӗ ӗҫсене октябӗрӗн 1-мӗшӗнчен кӑна ӗҫкӗнекисем ҫине кӳртме хушнӑ. Ҫака вӑл колхозниксен малала ӗҫлес ӗмӗтне чӑрмантарнӑ. Государствӑна обйазательнӑ йӗркепе тырӑ тӑратас, кивҫен илнине тавӑрса парас тата МТС натурплатӑ тыррине тӳлессине „Ленин ҫулӗпе", „Первомайск", Сталин йулташ йачӗпе тӑракан колхозсем халӗ те пурнӑҫа кӗртмен.

Н. Пушкин.



Совет Сойузӗнчи кинотеатрсенче халь „Ленин в Октябре" йатлӑ художествӑлӑ-историлӗ революцилӗ саслӑ фильм кӑтартаҫҫӗ. В. И. Ленин рольне ССР Сойузӗн халӑх артисӗ В. В. Щукин вылять.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: „Ленин в Октябре" фильм кадӑрӗ.

(Сойузфото репродукцийӗ).

Сталинла уйӑхлӑха кӗме хатӗрленеҫҫӗ

Аслӑ Чакри аластаҫҫем (Вӑрмар р.) суйлав умӗнхи сталинла вунӑкунлӑха хутшӑнса ӗҫлесе чылай ҫитӗнӳсем турӗҫ. 410 пин штук кирпӗч хӗртсе кӑларса плана 109 процент тултарнӑ. Анчах черепицӑ тӑвас ӗҫ кайа йулса пырать-ха. Ӗҫе кирлӗ пек механизацилеменнине пула черепицӑ тӑвас плана ӑнӑҫлӑн тултарса пыраймаҫҫӗ.

Ӗҫе механизацилесси тата 1938 ҫулта кирпӗч, черепицӑ тӑвас ӗҫе вӑйлатасси ҫинчен декабӗрӗн 24-мӗшӗнче пулса иртнӗ аластаҫсен пухувӗ тӗплӗн сӳтсе-йаврӗ. Пуху 1938 ҫулта 180 пин штук черепицӑ кӑларакан завод лартма, ҫулталӑк хушшинче 470 пин штук кирпӗч тума йышӑнчӗ.

Халӗ аластаҫсем йанвар уйӑхне сталинла уйӑхлӑх тума хатӗрленес тата ҫӗнӗ ҫула ӳсӗмсемпе кӗрессишӗн кӗрешеҫҫӗ. Йанвар уйӑхӗнче стахановла ӗҫлеме материалсем, ӗҫхатӗрсем хатӗрлеҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах 1937 ҫулхи плана 130 процент тултарассишӗн кӗрешӗве вӑйлатсах пыраҫҫӗ.

А. Андрианов.

Стахановецсен йышӗ ӳсет

ТУРХАН. Липовкӑри Ленин йачӗпе тӑракан аласталӑх ертелӗнче йӗркесӗрлӗхсем пулни ҫинчен „Чӑваш Коммунӗ" хаҫатра темиҫе хут та ҫутатса панӑ. Унта, йӗркесӗрлӗхсем пуласси чи пирвайах ертел председателӗ Асанов ертел аппаратӗнче тӑшманла елементсене тытса усранипе тата завод ӗҫне пур майсемпе те чӑрмантарса пынипе пулнӑ.

Ертелти аластаҫсем Асановӑн ӗҫӗсене тӗплӗн тишкерсе тухнӑ хыҫҫӑн Асанова ертел председателӗнчен те кӑларса сирпӗтрӗҫ. Ҫакӑн хыҫҫӑн рабочисем хушшинче стахановла йухӑм вӑйлансах пыма пуҫларӗ. Стахановецсен йыше ӳссех пырать. Александрова йулташ хӑйӗн нормине 120 процент, Воробйовӑпа Константинова йулташсем 152 процентшар тултарса пыраҫҫӗ. Ҫавӑн пекех Мокейева, Малышева, Максимова т. ыт. йулташсем те лайӑх тӗслӗхсем параҫҫӗ. Рабочисем ҫӗнӗ ҫула нормӑна 170 процентран кайа мар тултарса ӗҫлеме тытӑнипе кӗтсе илетпӗр, теҫҫӗ.

И. Архипов.

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунҫул строителстви

Машинла бригадӑ ӗҫлеме тытӑнать

Лини хывассине пӗр чарӑнусӑр, хӑвӑрттӑн илсе пыма ҫул уҫӑ. Анчах та лини хывас ӗҫ йерипен пырать. Декабӗрӗн 27-мӗше тӗлне хывнӑ лини тӑршӗ 23,7 километр ҫеҫ шутланать. Кунашкал пулни рельсасем сарнӑ ҫӗрте ӗҫ вайӗ ҫителӗклӗ пулманнинчен килет. Пайанхи куна унта 126 ҫын ҫеҫ ӗҫлеҫҫӗ.

Пайан-ыранах лини хывнӑ ҫӗрте урӑх ҫӗрти строителствӑран килнӗ машинла бригадӑ ӗҫлеме пуҫлать. Вӑл бригадӑра 250 ҫын ытла тата нумай машинсем пулаҫҫӗ. Вӑл бригадӑ куллен темиҫе километр хуши лини хывма пултарать.

Бригадӑ килни выранти бригадӑсем, рабочисем хушшинчи ӗҫе лайӑх организацилеме, вӑйлатма ыйтать. Лини хывакан бригадӑсем патне материалсем ҫителӗклӗ тӑратмала. Ҫавӑнпа пӗрлех лини хывнӑ вырӑнсене хӑйӑр сарас ӗҫе вӑхӑтра туса пымала.

Ҫитес ҫулхи вӑйлӑ тырпулшӑн

ВӐРНАР. Районра чылайӗшӗ колхозсем ҫитес ҫулхи вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешме тытӑнчӗҫ. Акӑ, Йамбахтинӑри „Партизан" колхоз пайанхи куна 1200 лав пӗве тӗпӗ кӑларнӑ. Плугсене, сӳресене йусанӑ. Агротехникӑна вӗренес тӗлӗшпе агрокружок организациленӗ. Унта 55 колхозник вӗренеҫҫӗ. Вылӑх-чӗрлӗхсене пӑхнӑ ҫӗрте ӗҫлекен колхозниксем ытларах тислӗк хатӗрлессишӗн кӗрешеҫҫӗ.

Ҫав вӑхӑтрах хӑшпӗр колхозсем пайанхи куна ҫитсе те вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешме тытӑнман. Чӑрӑшкас Мӑратри „11 лет Чувашии" колхоз кӑҫал тунӑ ҫитӗнӳсемпе лӑпланса ларнӑ. Ҫитес ҫулхи вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешме шутламаҫҫӗ унта. Вӑрлӑхсене тасатма тытӑнман. Йалхуҫалӑх машинӗсем кӗркунне мӗнле кӗртсе лартнӑ, ҫапли пех лараҫҫӗ. Тислӗк ытларах хатӗрлес тӗлӗшпе сас-чӗвӗ те илтӗнмест. Колхозниксем агрокружокра вӗренесшӗн. Анчах вӗсене никам та вӗрентекен ҫук.

Райҫӗрӗҫ пайӗ колхозсене ҫитес больщевикла ҫуракине хатӗрленес ҫӗрте ҫителӗклӗ йертсе пымасть. Райҫӗрӗҫ пайӗнче ӗҫлекенсем хӑш колхоз ҫуракине хатӗрленес ҫӗрте малта пынине те каласа пама пултараймаҫҫӗ.

Ҫӗнӗ ҫул ҫывхарса ҫитрӗ. Ҫӗнӗ ҫула пысӑк ҫитӗнӳ тунипе, уйрӑмӑнах ҫитес ҫулхи вӑйлӑ тырпулшӑн больщевикла кӗрешнипе кӗтсе илмеле.

Н. К.

„Турӑ служителӗсен" контрреволюцилӗ ӗҫӗсем

Кирек мӗнле тӗн те—христиансен те, мусульмансен те, иудейсен те т. ыт. те ӗҫсыннисемшӗн чӑн пурнӑҫ „леш" тӗнчере пулать, тесе вӗрентет. Сылӑхсӑррисем райа, сылӑхлисем тамӑка лекӗҫ, тет тӗн.

Савнашкал йумахсем, паллах, експлоататорсене кирлӗ, ӗҫсыннисен тимлӗхне ҫӗр ҫинчен пӗлӗт ҫине куҫарма, революцилӗ кӗрешӳрен сирсе йама, пӗлӗт ҫинчи „рай" текеннишӗн етемлӗхе ҫӗр ҫинчи тамӑкра пӑхӑнтарса усрама кирлӗ. Коммунисӑм пролетарисене тата ӗҫсыннисене ҫӗнӗ пурнӑҫшӑн, експлоатацисӗр те пусмӑрсӑр пурнӑҫшӑн революцилӗ кӗрешме чӗнет. Тӗн ӗҫсыннисене хӑйсене пусмӑрласа тата експлоатацилесе пуракансене хирӗҫ кӗрешме пултарайман сынсем туса хума, капиталӑн йӑвап чурисем туса хума тӑрӑшать. Тӗн буржуази аллинче коммунисӑма хирӗҫ кӗрешмели орудипулса тӑрать.

Ӗненекен ӳпкелешме те, кӑмӑлсӑрланма та пултараймасть. Тӗн ӳпкелешме хушмасть, мӗн пур йӑвӑрлӑха, хурлӑха, хӗнхура, асапа, пусмӑра пӗр сӑмахсӑр, пӗр хирӗҫмесӗр чӑтса йурӑнма вӗрентет. Вӑл ҫӗр ҫинчи мӗн пуррине пурне те турӑ тунӑ, мӗн пурри пур те турӑран килет, тесе вӗрентет. Ҫавӑн пек вӗрентӳ камшӑн усӑлли каламасӑрах та паллӑ. Тӗн ултавӗ ӗҫсыннисен тарӗпе йунӗнчен хӑйсене вальли пуйанлӑх тӑвакан експлоататорсене кирлӗ.

Ӗҫсыннисен пуҫ тӑнне мӗн май килнӗ таран ытларах пӑтратас тесе, тӗн „турӑ умӗнче сынсем пурте пӗртан" текен икӗпитлӗ сӑмах ҫаптарать. Унтан та ытларах, христос тӗнӗ тӑшмана йуратма хушать. „Епӗ сире калатӑп: хӑвӑран тӑшманусене йуратӑр, хӑвӑра ылханакансене пиллӗр, хӑвӑра курайманнисене ырӑ тӑвӑр, хӑвӑра кӳрентерекенсемшӗн тата хӑвӑра хӗсӗрлекенсемшӗн кӗлӗ тӑвӑр" (Йевангели, Матфей, V-мӗш сыпӑк).

„Кирек мӗнле тӗн те, експлоататорсене пӑхӑнса пурӑнма тата вӗсене йуратма хушнине пӗрлех, тепӗр наци сыннисене кураймасӑр пурӑнма вӗрентет. Ҫакӑ вӑл ӗҫсыннисене революцилӗ кӗрешӳрен наципе хирӗҫӳсен ҫулӗ ҫине пӑрса йарасси патне илсе пырать.

Ҫапла ӗнтӗ тӗн идеологии класлӑ тупсӑмӗ. „Кучухнехи тӗнсене тата чиркӳсене пурне те, тӗрлӗ тӗн организацисене пурне те,—тесе сырнӑ Ленин,—марксисӑм йалан буржуалӑ реакци органӗсем, рабочи класа анкӑ-минкӗлетессине тата експлоатацийе хӳтӗлекенскерсем, тесе шутлать"*).

Тӗн организацисем пӗтӗм ӗҫе рабочисене тата хресченсене идеологи тӗлӗшӗнчен хӗспӑшалсӑрлантарассине, капиталиссене тата помещиксене ӗҫсыннисем чуралӑхпа чухӑнлӑха хирӗҫ протестленине пуҫарса лартма пулӑшассинче пулать.

Капиталиссен тата помещиксен влаҫне сирпӗтсе антарнӑ хыҫҫӑн та тӗн хӑйӗн контрреволюцилӗ ӗҫӗсене пӑрахмасть. Социалисӑмлӑ аслӑ революци ҫӗнтернӗ хыҫҫӑн тӗнпе чиркӳ организацийӗсем, пур йышши „турӑ служителӗсем", сектантсен проповедникӗсем т. ыт. ҫавнашкаллисем ҫамрӑк совет влаҫне хирӗҫ сахал мар йунлӑ ӗҫсем тунӑ. Восстанийе ҫӗкленӗ рабочисемпе хресченсене хирӗҫ вӗсем шургвардейцӑсемпе пӗрле, интервентсемпе пӗрле кӗрешнӗ. Вӗсем халӗ те совет влаҫне хирӗҫ кӗрешме чарӑнман. Тӗнпе чиркӳ организацийӗсем хӑйсен кӗрешӳ меслечӗсемпе формисене ҫеҫ улӑштарнӑ, социалисӑма хирӗҫ кӗрешме пӑрахман.

Чиркӳн контрреволюцилӗ ӗҫӗнче Пӗтӗм Российӑри чиркӳ соборӗ текенни уйрӑмӑнах пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Собор 1917 ҫулти августӑн 15-мӗшӗнче Мускавра пухӑннӑ. Ӑна тытса усрама Вӑхӑтлӑх правителствӑ икӗ мӗлйун тенкӗ укҫа панӑ, правителствӑ пуҫлӑхӗ Керенский собора уҫнӑ ҫӗрте пулнӑ. Собора 569 делегат — 270 церковник тата 299 „мирйан" пухӑннӑ. „Мирйансен" хушшинче князсемпе графсем 11, генералсемпе офицерсем 10, патша чиновникӗсем 132, помещиксем 22, шултра буржуазипе вак буржуази представителӗсем 41, буржуалӑ интеллигенци представителӗсем 69 пулнӑ. Церковниксен хушшинче 10 митрополит, 17 архийепископ, 53 йепископ пулнӑ. Кӗскен каласан, тусем пухӑннӑ,—собор—чиркӳ контрреволюцин штабӗ пулса тӑнӑ.

1917 ҫулти августӑн 24-мӗшӗнче ҫарпа флота чӗнсе каланинче офицерсене итлеме хушнӑ, большевиксем ҫинчен темӗн тӗрлӗ вӑрҫса ҫырнӑ. Корнилов пӑлхавӗ чухне собор Корнилов генерал патне саламлӑ телеграммӑ йанӑ. Большевиксен „Социал-демократ" йатлӑ хаҫачӗ 1917 ҫулти сентябӗрӗн 15-мӗшӗнче ҫапла сырнӑ: „Халӗ ӗнтӗ рйасӑ тӑхӑннӑ ҫынсем ӗҫе тытӑнчӗҫ. Ӑнланмала ӗҫ: вӗсен Корнилова хӳтӗлеме турӑна, светой аттесене, кӗлӗсене тата христианла кӑмӑллӑха хута йамала. Салтаксене персе пӑрахнӑ чухне вӗсем шарламарӗҫ. Сывӑххине йуратасси вӗлерессине килӗшмест, тесе каламарӗҫ... Чиркӳ служителӗсене йертсе пыракан корниловла вӑрттӑн кавара ӗҫмӗрсе тӑкмала".

Пупсем, ҫав рйасӑ тӑхӑннӑ помещиксем тата укҫа пӗркенӗ капиталистсем Октябӗр революцийӗ умӗн ҫапла хӑтланнӑ. Октябӗр кунӗсенче вӗсем йункерсемпе пӗрле алла хӗҫпӑшал тытса, рабочисене хирӗҫ кӗрешнӗ. „Правда" хаҫат 1917 ҫулти нойабӗрӗн 4-мӗшӗнче ҫапла сырнӑ: „Йункерсем Христос-спасител храмне тытса тӑраҫҫӗ, чиркӳ тӑрне пулемйотсем лартнӑ тата, пулемйотсенчен пенисӗр пуҫне, винтовкӑсенчен сурӑлса кайакан пульӑсемпе переҫҫӗ. Вӗсем пирӗн пӗр йулташа чӗркуҫирен ӳлерех амантнӑ, пуля тивнӗ ҫӗрте пӗтӗм ашне тӑпӑлтарса кӑларнӑ. Амантнӑ йулташ видӗ. Тепӗр йулташӑнне ҫурлакан пульӑпа пӗтӗм кӑкрине ҫурса пӑрахнӑ".

Чиркӳ контрреволюцине собор суйланӑ монархис-патриарх Тихон йертсе пынӑ. Ҫав чиркӳ патшин тавра контрреволюцилӗ вӑйсем пуҫтӑрӑнса тӑнӑ. 1918 ҫулти йанварӗн 19-мӗшӗнче кӑларнӑ посланире патриарх Тихон совет влаҫне персе антарма чӗнсе каланӑ. Патриарх Тихонпа унӑн соратникӗсем интервентсемпе, шпионсемпе, диверсантсемпе, шурӑгвардейцӑсемпе пӗрле ӗҫленӗ. Тихон вӑрттӑн каварсене хутшӑннӑ, вӗсене пилленӗ, йулӑшса тӑнӑ. Вӑл интервентсемпе уйрӑм килӗшӳсем туса ҫирӗплетнӗ. Кайарахпа совет халӑхӗн чи усал тӑшманӗ—патриарх Тихона совет суйчӗ умне тӑратнӑ.

Пупсем, муллӑсем, равинсем, ксендзсем, пасторсем, сектантсен вожакӗсем граждӑн вӑрҫи вӑхӑтӗнче те контрреволюци йенче пулнӑ. Вӗсем колчаксене, деникинсене, врангелсене, вӗсен бандисене служит тунӑ.

Колчак патӗнче йепископ Андрей тата йепископ Силвестр пулнӑ. Вӗсем контрреволюцилӗ пропагандӑ сарнисӑр пуҫне тӗрлӗрен „Иисус полкисем", „турамӑш полкисем" т. ыт. те организациленӗ. „Иисус полкисене" пӗтӗмпех Англи империалисӗсем хӗҫпӑшаллантарнӑ.

Деникин патӗнче митрополит Антоний Храповицкий ӗҫленӗ. Вӑл большевиксене хирӗҫле пропагандӑ комитечӗ организациленӗ, ҫавӑншӑн ӑна Деникин штабӗ уйӑхсерен 365 пин тенкӗ парса тӑнӑ.

Совет влаҫне хирӗҫ кӗрешес ӗҫре ытти тӗнсем те христос тӗнӗнчен йулман. Деникин патӗнче йеврей раввинӗ Пасманик пулнӑ. Ҫӗпӗрте, Колчак патӗнче, мусульман духовенстви „Магомет полкисем", „симӗс йалав дружинисем" организациленӗ. Католик пупӗсем Польшӑра ҫарӗнче служит тунӑ. Вӗсем большевисӑма хирӗҫ кӗрешес ӗҫре шуйтана служит тума та хатӗр пулнӑ.

Чиркӳ служителӗсен контрреволюцилӗ агитацийӗ ҫинчен тата вӗсем хӗҫпӑшал тытса совет влаҫне хирӗҫ кӗрешни ҫинчен граждӑн вӑрҫинче пулнӑ йулташсем нумай каласа пама пултараҫҫӗ.

Чиркӳ служителӗсем совет влаҫне хирӗҫ кӗрешме пӗр самантлӑха та пӑрахман. Вӗсем мӗн пур шпионлӑ, диверсилӗ ӗҫсене, контрреволюцилӗ ӗҫсене хутшӑннӑ, чылай чухне ҫавсене йертсе пыракансем пулнӑ.

1929 ҫулти октябӗрте Ҫурҫӗр Кавказра, Астраханьре, Вйаткӑра, Серпуховра, Воронежра т. ыт. ҫӗрте те контрреволюцилӗ чиркӳ организацийӗсене тупса палартнӑ.

Пупсем тата сектантсен проповедникӗсем уйрӑмӑнах колхоз стройне хирӗҫ урса кайса кӗрешрӗҫ, кӗрешеҫҫӗ те. Мӗнле ирсӗр сӑмахсем сармарӗҫ пулӗ вӗсем: „хӗрарӑмсене Китайа илсе кайаҫҫӗ", „пурне те пӗр ҫивитти айне пӑрахаҫҫӗ", „колхозра ыҫа вӗлереҫҫӗ" тенӗ елек сарчӗҫ. Анчах вӗсем пӗр агитаципех чарӑнса тӑман, унсӑр пуҫне тата контрреволюцилӗ ушкӑнсем чӑмӑртантарса пынӑ.

1934 ҫулта Чӑваш республикинче тупса палӑртнӑ ҫавӑн пек ушкӑн хӑйӗн умне колхоз стройне аркатса тӑкас задачӑ лартнӑ: „Мӗнле пулсан та хресченсене колхоза кӗресрен тытса чармала. Колхозсене салатса йамала. Халӑх хушшинче тӗне ӗненессине вӑйлатмала. Патша йӑхӗсем пурнаҫҫӗ тенӗ суйа хыпар сармала. Ӗненекенсене Варфоломей каҫне хатӗрлемеле". Ҫапла пулнӑ ҫав чиркӳ организацин программи. Паллах, вӑл троцкисла-бухаринла бандӑсен программинчен нимӗнпе те уйӑрӑлса тӑмасть.

Пупсем буржуалӑ националиссемпе, ес-эрсемпе, шурӑгвардейцӑсемпе, кулаксемпе пӗрле совет влаҫне хирӗҫ кӗрешнӗ. Ахальрен мар ӗнтӗ чӑваш националисӗсем 1917 ҫулти декабӗрте Хусанта ҫӗр сийӗсӗ пухса, Хусан соборӗнче молебен тутарнӑ. Чӑваш халӑхӗн ылханлӑ тӑшманӗ М. Петров, ун чухне пуп пулнӑскер, совет влаҫне хирӗҫ кӗрешнӗ. Буржуалӑ националиссен лидерӗ Елмен 1917 ҫулта Саратовра йункерсен шкулӗнче вӗреннӗ. Саратоври йункерсем пупсемпе пӗрле Октябӗр кунӗсенче Совет влаҫне хирӗҫ восстани тунӑ. Вӗсем рабочисене, красногвардейцӑсене чиркӳ тӑрне лартнӑ пулемйотсенчен пенӗ. Ҫав контрреволюцилӗ восстанийе Елмен хастарӑн хутшӑннӑ.

Ахальрен мар ӗнтӗ буржуалӑ националиссем „Чӑваш пупӗсем вырӑс пупӗсем пек мар, вӗсем халӑха усал туман" тенӗ теорийе аталантарма хӑтланнӑ. Пупсем контрреволюцилӗ, сӑтӑрлӑ ӗҫре халӑх тӑшманӗсемпе чылай пысӑк тӗрек пулса тӑнине лайӑх пӗлсе тӑнӑран ӗнтӗ буржуалӑ националиссем пупсене мӗн пур майсемпе хӳтӗлеме тӑрӑшнӑ.

Халӗ ӳссӗн кӗрешмӗ май суккине кура пупсем тата сектантсен вожакӗсем, ытти тӑшмансем пекех, маскӑсене улӑштараҫҫӗ, хӑйсене совет сыннисем пек кӑтартма тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫав хушӑрах вӑрттӑн сӑтӑр тӑваҫҫӗ, час-часах троцкисла-бухаринла шпионсемпе сыхӑнса ӗҫлеҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл пире пур ӗҫре те большевикла сыхӑ пулма, ҫивӗч куҫлӑ пулма хушать, тӗне хирӗҫле ӗҫе мӗн пур майсемпе вӑйлатма хушать.

*) Ленин — „Об отношении рабочей партии к религии", т. XIV, стр. 68.

Руставели çинчен хунă халап

Грузири халăх йурăçисемпе халапçисенчен Шота Руставели çинчен калакан интереслă йумахсене нумай илтмĕ пулать.

Руставелипе Патаршени йалĕнчи Елизбаран хĕрĕ хушшинчи йурату çинчен тĕрлĕрен калаçу пур. Çавă нумай калаçуран пĕри çапла: „Пĕрреччен Руставели хăйĕн тăван Рустави йалĕнчен Тмогвина кайма тухнă. Тома Тмогвели феодалăн ытарма çук хитре хĕр пурри çинчен илтнĕ те, ăна качча илме шухăшланă вăл. Çул çинче, Ормоци йалĕ патĕнче пĕр хĕр, Абашидзене тытса тăраканăн хĕрĕ тĕл пулать. Шота унтан шыв ĕçтерме ыйтать. Хĕр, Кекела йатлăскер, Шотана çапла калать: Ĕçессу килет пулсан, киле пыр,—тет.

Кекелан çичĕ пиччĕшĕ те килте пулман, вĕсем вара иккĕшех калаçса ларнă, Шотапа Кекела пĕрне-пĕри йуратса пăрахаççĕ, вара çакăн пек тупа тăваççĕ: „Шота хăйĕн сăмахĕпе хуçа пулмасан—ăна Кекела вĕлермеле, Кекела ултăласан—Шотан ăна вĕлермеле“.

Çакăн пек тупа тунă хыççăн Руставелипе Кекела уйăрăлаççĕ. Кекела хăйсен килне йулать. Шота малала çул тытать. Каç пулнă вăхăтăла вăл Тома Тмогвели патне çитет. Кунта касхи апат çинĕ вăхăтра илемлĕ Нинăна курать. Вăл ăна Кекелăна йуратнинчен те ытларах килĕштерет. Тепĕр кунне туй тăвасси çинчен каласса таталнă: Шотан май уйăхĕнче туйпа Нинăна илме килмеле.

Каласса таталнă вăхăтра туй иртернĕ. Туй хыççăн Шота хăйĕн çамрăк арăмĕпе килне, Рустави йалне кайма тухать. Кекелăпа курнăçас мар тесе, урăх çулпа кайма шутлать. Анчах Кекела Шота авланни çинчен пĕлет. Вăл кеçĕнçынпа йалне таврăнма тухни çинчен те ун патне хыпар çитнĕ. Вара Кекела пăшал илнĕ те, аслă пиччĕшĕн лаши çине утланса, Шота килмели çул çине кайнă.

Ку ĕç кăнтăрла вăхăтĕнче пулнă. Пиччĕшĕсем йăмăкне питех те нумай кĕтнĕ. Йăмăкĕ таврăнман. Аслă пиччĕшĕ пулĕмрен тухса пăхать: йăмăкĕ те, лаши те, пăшалĕ те çук пулнă. Вара вăл хăйĕн шăллĕсене кăшкăрнă:—„Тухăр-ха, пирĕн йăмăка такам вăрласа кайнă йе хăй тухса тарнă“.

Килкартине чупса тухнă. Килкартинчен Кекела лашапа шыв урлă каçса кайни курăннă. Хумсем ăна часах тепĕр йенчи çыран хĕррине кăларнă. Кекела çул çине тухнă. Ăна хирĕç туй пынă. Вăл çула пулсе тăнă та, Шотана çапла каланă: „Чарăн та, манпа тупа тунине аса ил“. Шота кăкăрне уçнă та, Кекелана:

— Епĕ айăплă, санăн мана вĕлермеле,—тенĕ. Вара Кекела лаша çинчен аннă та, Шотана пысăк тўрĕлĕхшĕн тав тунă.

Кекела килне таврăнсан, унтан вăл аста кайни çинчен, кампа калаçни çинчен ыйтнă.

— Вăл—Шота Руставели, туйран кĕçĕнçынпа таврăнать. Епĕ вĕсене ырă пурнăç сунма карăм,—тесе кĕскен çеç ответленĕ. Кекела пиччĕшĕсене чăн-чăн ĕç мĕнле пулни çинчен пĕр сăмах та каламан.

И. Б.

Иван Ивник

Руставелине асăнса

Ĕмĕр хыççăн ĕмĕр иртрĕ,
Пĕрре мар çĕнелчĕ йурă,
Ту-сартсем те урăхланчĕç,
Тепĕр май йухаç шывсем,—
Есĕ çав-çавах мухтавлă,
Çав-çавах патвар, хăйулă,
Хаљ те уççăн йанăраççĕ
Сан илемлĕ йуррусем.

Йурăсти, вăл—шăпчăк йевĕр,
Йаланах йурлать хаваслăн,
Çут хĕвел йалан хĕрўлĕ,
Çут уйăх йалан чечен,—
Ес те çавăн йевĕр, гени,
Сан йату мухтавлă, чаплă.
Ма тесессĕн, ес йурланă
Туслăх, паттăрлăх çинчен.

„Хурлăх-мĕн килсе тухсан та
Пул мăнаçлă, пул ес çирĕп,
Тăшмана нихçан ан парăн,
Чыслăн вил çапăçура“,—
Кĕрешмешкĕн, çĕнтермешкĕн
Йыхăрать сан муза-лиру,
Тус пулмашкăн, йуратмашкăн
Етеме вăл йыхăрать.

Тариел те, Авдандил та,
Вĕсемпе пĕрле Фридон та,—
Кашнийех паха та чаплă,
Халăх тусĕсем—вĕсем.
Вĕсене мухтанă есĕ,
Йанăравлă сăвă хунă,
Вĕсене чыслаççĕ санăн
Вут-хĕлхемлĕ йуррусем.

Ĕмĕрсен шевлийĕ—Шота,
Çута гени Руставели.
Пирĕн ĕмĕре ес çитрĕн
Чаплă çăлтăр çутти пек.
Пирĕн ĕмĕр—çĕнĕ ĕмĕр,
Пирĕн ĕмĕр çут хĕвеллĕ,
Пурăнатпăр епĕр халĕ
Аслă Сталин ăшшипе.

Ĕмĕрсен шевлийĕ—Шота,
Çута гени, Руставели!
Вырăс-и, чăваш-и, месх-и,
Халĕ пурте ырлăхра,
Вырăс-и, грузин-и,—пурте
Пурăнатпăр пĕр çемйелĕн,
Пĕр тăван пек мĕн пур халăх
Пирĕн аслă çĕршывра.

Районти библиотека

Вăрмарти библиотекă йулашки вăхăтра хăйĕн ĕçĕсене лайăхлатрĕ. Вулакансене кирлĕ кĕнекесем çителĕклĕ. Хаљ унта 7.000 кĕнеке ытла шутланать, çавăн пекех вулакансен шучĕ те ўсет. Кунтах уйрăм вуламали пулĕм туса пачĕç. Унта ваљљи çĕнĕ хаçат-журналсем килсе тăраççĕ.

— Вен. Боровкин.

Почтаљйон ĕçĕ

ТУТАРКАС. Йатманри Никифор Алексейев почтаљйонта 5-мĕш çул ĕçлет. Хаçатсене подписчиксем патне вăхăтра тĕрĕс çитерет. Ĕçхресченĕсене хаçат-журналсен усси çинчен каласа ăнлантарать. Вăл „Чăваш Коммунĕ“ хаçата 85 екземпљар сарчĕ. Пĕтĕмпе 1200 тенкĕлĕх хаçат-журналсем çыртарнă. Алексейев районри почтаљйонсем хушшинче пĕрремĕш вырăн йышăнса тăрать. Вăл „Сойузпичетрен“ 4 хут преми илнĕ.

К. Пушкин.

Савăнăçлăн канма

СĔНТĔРВĂРРИ. Районри пур шкулсенче те вĕренекенсем хĕллехи каникула савăнăçлăн иртерме хатĕрленеççĕ. Çĕнĕ çула кĕтсе илес май декабĕрĕн 31-мĕшĕнче Сĕнтĕрвăрринчи, Шĕнерпусĕнчи, Хуракассинчи вăтам шкулсемпе Есмĕлти, Кутемерти туллимар вăтам шкулсенче савăнăçлă йолкăсем пулаççĕ. Çĕрпўркелў, вăрман ĕç, йăвăç ĕçне вĕрентекен техникумсенче бал-маскарадсем туса иртереççĕ.

Хуракассинче вăтам шкулпа Есмĕлри туллимар вăтам шкул патĕнче катоксем тунă. Кунсăр пуçне, йĕлтĕрçĕсен похочĕсем пулса иртеççĕ.

Каникул вăхăтĕнче поход иртереççĕ

Кăçал пединститутра оборона ĕçне вĕренесси массăллăн саралса кайрĕ. Пайанхи куна институтра тĕл пеме вĕренекенсен кружокĕсем 25. Вĕсем çирĕп расписанипе кулленех 2-шер сехет черетленсе ĕçлеççĕ. ПВХО нормине пама хатĕрлекен кружоксене подкурссенчен пуçласа учителсен тата педагогикă институчĕсен 2-мĕш курссем таранах çавăрса илнĕ. Пайанхи куна „Ворошиловла тĕл перекенсен“ значокне (1 ступенĕ)—72 студент илнĕ, ПВХО (1 ступенĕ)—83 çын илнĕ.

Социалисăмла çĕршывăн чи мухтавлă рабочисемпе хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ 20 çул тултарнă йатпа хĕллехи каникул вăхăтĕнче йĕлтĕрпе поход туса иртереççĕ. Командăра 15 студент пулать: командорĕ — Николайев, политрукĕ—Желтов, старшина—Исайев. Командă 300 километр хушши çапла маршрутпа кайать: Шупашкар—Ишлей—Трак—Елĕк—Нурăс—Çĕмĕрле—Хĕрлĕ-Чутай—Йетĕрне—Мăн-Сĕнтĕр—Шупашкар. Командă хăй чарăнакан вырăнсенче Хĕрлĕ Çарăн 20 çулхи ўсĕмсем çинчен докладсем туса парать, тĕл пемели ăмăртусем иртерет. Шкулсенче тата вуламали çуртсенче вечăрсем иртерме хатĕрленет, физкуљтурă вăййисем пулаççĕ т. ыт. те.

К. Лазарев.

Комсомол организацин ĕçне лайăхлатмала

Çĕнĕ Тĕмерти пуçламĕш комсомол организацийĕн ĕçĕ сўнсе ларнă. Ку хыпара райкомол та аван пĕлет. Пуçламĕш организацин организаторĕ В. Павлов йулташ Хĕрлĕ Çара кайсан, çĕнĕрен организатор суйламан. Райкомол секретарĕ Кнљазев йулташ „есĕ комсорг пул, еппин“ тесе, В. Краснов учителе хушса йанипех лăпланса ларнă. В. Краснов йулташ комсомол ретне те икĕ уйăх кайала çеç кĕнĕ. Анчах, калас пулать, комсомол еретне те иккĕленсе çеç кĕнĕскер, вăл ленинла комсомол ĕçне тĕлĕкре те аса илмест.

Пуçламĕш шкулта вĕрентекен хăшпĕр учителсем (Афанасйев, В. Краснов йултăшсем) ĕçе йусассишĕн тăрăшмаççĕ. Йалсоветĕ йе вулав çурчĕ çумĕнче туса пымали ĕçсене пурнăçлассишĕн пĕрех те ĕçлени çук; пачах урăхла, айаккине пăрăнса çўреме тăрăшаççĕ.

Пуçламĕш организацинче 3 комсомолец шутланса тăраççĕ (В. Краснов, А. Галкина, Г. Йегоров). Анчах, пуçламĕш организаци йалти çамрăксене йертсе пымасть. Комсомолецсем 3 уйăх хушшинче те пĕр пуху туса иртермен. Ку тĕслĕхсенчен ĕнтĕ, организаци пĕтсе ларас патне çитни курăнать.

Горлей Йегоров комсомолец организацин ĕçĕ çук пирки (пĕлес пулать, ĕç çук пулсан, дисциплинă та çук вара) колхоз пурлăхне çаратакан Жуковпа тата Марковпа йавăçса кайнă.

Йалта вулав çурчĕ те пур. Ку куљтурлă центрта комсомол организацин ĕçĕ тĕп вырăнта пулмала. Халăх хушшинче куљтмассăллă ĕçе туса пырасси, пуринчен ытла, вулав çурчĕн пуçлăхĕпе пĕрлех, комсомолан ĕçĕ пулса тăрать.

Пуçламĕш организаци ĕçĕ çавăн пек йапăхса кайнине чăтма çук.

Н. Алексейев.

Декабĕрĕн 31-мĕшĕнче Мускаври Горьки йачĕпе тăракан Академилĕ художествăллă театрĕнче аслă пролетарилĕ писател Алексей Максимович Горькийăн „На дне“ йатлă лайăх пйессине пирвайхи хут лартнăранпа 35 çул тулать. Çак пйесă револљуцичченхи Российăра пысăк событи пулса тăнă.

ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: „На дне“ пйесăн 4-мĕш пайĕнчи сценă.

(Сойузфото репродукцийĕ).

Выљăхсене шута илес ĕçе лайăх иртерер

Тепĕр виçĕ кунтан выљăхсене шута илсе тухас ĕç пуçланать. Выљăхсене шута илсе тухасси хуçалăхра политикă ĕçĕнче пит те пысăк вырăнта тăрать. Вăл иккĕмĕш пйатилеткă пĕтнĕ тĕле пирĕн социалисăмла çĕршывра выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç мĕнле тăнине тĕплĕн кăтартса парса, виççĕмĕш пйатилеткăра выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес йенĕпе план тума тĕплĕн материал парать.

Çак пысăк ĕçе туса ирттерме счетчиксене пин çур çын ытла мобилизациленĕ. Выљăхсене шута илес ĕçе лайăх иртерес тĕлĕшпе пур районсем те ăмăртса ĕçлеççĕ.

Анчах та выљăхсене шута илес ĕçе хатĕрленесси районсенче халĕ те çителĕклĕ пымасть. Çĕрĕç халăх комиссариачĕн оргăнĕсем выљăхсене инвентаризацилес ĕçе начар йертсе пыраççĕ. Нумай районсенчи колхозсем ку ĕçе халĕ тин тытăнаççĕ. Вăрмар, Трак, Тутаркас районĕсенчи колхоз счетоводчĕсене вĕрентес ĕçе декабĕрĕн 19—20-мĕшĕсенче çеç туса иртернĕ. Шăнкăртам районĕнче çакна та туса иртермен.

Райĕçтăвкомсемпе парти райкомĕсем халăх хуçалăхĕн учот управленин районсенчи инспекторĕсене кирлĕ таран пулăшмаççĕ, вĕсен ĕçне тĕрĕслемеççĕ. Çапла, Шăхасан райĕçтăвкомĕ халăх хуçалăхĕн учот управленин районри инструкторне ĕçпе пулăшас вырăнне, районра выљăх-чĕрлĕхе шута илсе тухас ĕçе хатĕрленнĕ май, колхозсене тухса çўреме лаша паман.

Выљăхсене шута илес ĕç пуçланиччен шутлă кунсем çеç йулчĕç. Парти райкомĕсемпе райĕçтăвкомсен, халăх хуçалăхĕн учот управлени оргăнĕсен тата йалсовечĕсен çак пысăк ĕç çинчен халăха тĕплĕн ăнлантарса памала, районрипе йалти актива мобилизацилемеле. Çапла вара перепиçре пĕр выљăха та шута илмесĕр хăвармала мар.

Выљăхсене шута илес ĕçе ирттернĕ чухне йалсоветсенче, колхозсенче тата государствă хуçалăхĕсенче организацилекен комиссисемпе бригадăсем пысăк вырăнта тăмала. Вĕсен массăллă-ăнлантарулă ĕçе туса иртернĕ чухне халăх хуçалăхĕн учот управленин оргăнĕсене пулăшмала.

Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç мĕнле тăнине шута илес ĕçе колхозсенче кирлĕ пек туса пымаççĕ. Ку тĕлĕшпе районри çĕрĕç пайĕсем начар ĕçлеççĕ. Выљăхсене шута илни социалисăмла выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе бољшевикла учота илес ĕçре улшăну тумала.

Халĕ парти райкомĕсемпе райĕçтăвкомĕсен çирĕплетнĕ учотчиксен йышне тепĕр хут пăхса тухмала, контроллĕ ĕçсем тума бригадирсене суйласа илсе çирĕплетмеле.

Выљăхсене шута илни государствăн пысăк ĕçĕ. Çак ĕçе районти парти организацисемпе райĕçтăвкомсем тата йалсовечĕсем çирĕп йертсе пырсан çеç лайăх туса ирттерме пулать.

Семенов.

Выљăх-чĕрлĕх перепиçне хатĕр мар

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшĕнче выљăх-чĕрлĕх хисепĕ мĕн чухлĕ пулнине пĕлме Пĕтĕм Сойузĕпе перепиç туса иртересси çинчен йышăннă постановлени тухнăранпа уйăх ытла иртрĕ ĕнтĕ. Анчах Трак районĕнчи халăх хуçалăх учочĕн управленинче ĕçлекенсем пайан хикуна çитсе те выљăх-чĕрлĕх перепиçне иртересси çинчен шугламаççĕ те. Кунта иртнĕ çулта чылай çитменлĕхсем пулнă пулин те, çакăнтан нимĕнле урок та туман. 1936 çулти перепиç вăхăтĕнче ĕçленĕ кадрсем хушшине шанчăксăр çынсем кĕрсе кайни те пулнă.

Пшонкă йалсоветĕнчи лишенец кулак хĕрĕ Савелева А. регистратор пулса ĕçленĕ. Выљăхсене шута илсе тухнă хыççăн, перепиç спискине çухатса пысăк чăрмав тунă. Çавнашкалах Йанкас йалсоветĕнче те Терентйев, Именевă йалсоветĕнче Кузьмин, Матвейев регистраторсем тимсĕрлĕхпе ĕçленине пула чылай выљăхсене çырмасăр хăварнисем те пулнă. Уйкас Йунтапа йалсоветĕнче те выљăхсене пытарса хăварнисем пулнă. Алманч йалсоветĕнче 3 хуçалăха выљăхсене пытарса хăварнăшăн судпа айăпланă. Çак çитменлĕхсем перепиçе вăхăтра хатĕрленменнипе тата массăна ăнлантарса паманипе пулса пынă.

Перепиç иртермешкĕн хатĕрленме шутлă кунсем йулчĕç. Трак районĕнче 7 йалсоветĕнче перепиç иртерме бригадăсем организацилемен, кадрсем çук. Çак çитменлĕх вăл—халăх хуçалăхĕн учочĕн управленийĕ ĕçе тимлĕн тытăнманнинчен килет ĕнтĕ.

Закамский.

60 счетчик уйăрнă

ВĂРНАР. Районра выљăх-чĕрлĕх перепиçне хатĕрленесси саралсах пырать. Перепиç иртерме районĕпе 60 счетчик уйăрнă. Вĕсене пурне те райĕçтăвком президиумĕнче пăхса тухса çирĕплетнĕ. Халĕ перепиçе иртерме уйăрнă çынсем перепиçе лайăх иртерес тĕлĕшпе ăмăртса ĕçлеме тытăнчĕç.

Кăмаш, Мамалай йалсоветĕнчи счетчиксем перепиçе мĕншĕн иртерни çинчен йаланах халăхсене ăнлантарса параççĕ.

Н. Козлов.

Хор кружокĕн концерчĕ

ШĂХАСАН. Туçи Çармăсри вулав çурчĕ çумĕнче колхоз хорĕ (руководителĕ Михайлов) ĕçлет. Кружокра 27 çын тăрать. Кружок куллен çĕнĕ йурăсем вĕренет. Хăйсен пултарулăхне йалта тата çывăхри йалсене кайса кăтартаççĕ. Декабĕрĕн 24-мĕшĕнче Йамаша кайса концерт пачĕç. 200 çынна йахăн пуханчĕç.

Итлесе ларакансем уйрăмăнах „Çывăхран та çывăх аслă Сталин“, „Песня о Сталине“, „Песня о Ворошилове“, „Урожайная плясовая“ тата ытти йурăсене çав тери килĕштерчĕç.

Ал. Иванов.

Лăпкă океанра лăпкă мар

1937 çулти ийуљ кунĕсенче Йапони çарĕсем Çурçĕр Китайа тапăнса кĕчĕç. Çапăçу чи малтан Љукоуцзйан патĕнче пуçланса кайрĕ. Унтан вара йапонецсем малала тапăнса пырса, Китайăн палла хулисене—Танцзина тата Бейпина, йулашки вăхăтра Шанхайа, Тайуаньа тата Китай столицине—Нанкина тытса илчĕç. Китайра вăрçă малала сарăлса пырать.

Йапони çарĕсем Çурçĕр Китайа тĕшкĕрсе кĕнĕ хыççăн, Англире коллективлă хăрушăсăрлăх майлисем агрессора сăмахпа кăна мар, ĕçпе те отпор парасси çинчен ыйту лартрĕç. Анчах „хутшăнмала мар“ текен позици майлисем агрессора отпор парас çула картласа хучĕç. Вĕсем çапла шутланă:—Љукоуцзйаори çапăçу, вăл—малала сарас çапăçу мар. Йапонин кăсйе тĕпĕсем шăтăк, пысăк вăрçă вăрçма укçа та çук, вăй та çук. Йапони дипломати тĕлĕшĕнчен пĕччеилĕхре тăрать, унăн туссем çук. Китайа пĕтĕм тĕнче кăмăллать. Йапонин Великобритани интересĕсем çине тапăнма хăйу çитес çук. Çапла, господасем, уççăр хыпса ўкер мар. Мĕн пуласси малашне паллă пулĕ.

Англи господисем, чăн та, страус пек, пуçĕсене хăйăр ăшне чикрĕç. Хăрушлăх, тен, пире тĕкĕнмесĕрех иртсе кайĕ, тесе шутларĕç пулас.

Йапони военщинин кўрсе тăракан хăрушлăх Англи интересĕсем çинчен сўрĕлсе кайма шутламасть. Йăлтах урăхла, вăл вăйланнă çемĕн вăйланса, Английе Китайран хăваласа кăларас хăрушлăх кăларса тăратрĕ.

Йапони çарĕсем Шанхай çине тапăнса пынă тапхăрта та Англи консерваторĕсем: „Йапони кăнтăр йеннеле пырас çукха, çурçĕреле çул тытĕ“, тесе шутланă. Августăн 26-мĕшĕнче Йапони љотчикĕсем Англин Китайри посолне персе амантрĕç. Англи правителстви çав тискерлĕхе хирĕç те сăмах вĕççĕн протесленисĕр пуçне урăх нимĕн те тумарĕ. Йапонин çар карапĕсем Англин суту-илљу карапĕсене тытса чарма, çар карапĕсене тупăсенчен пеме тата сывлăшран бомбăсемпе çĕмĕрме пуçларĕç.

Унтан та ытларах, Йапони çарĕсем Китайра çурçĕр йеннеле те, кăнтăр йеннеле те малала тапăнса пыраççĕ. Вĕсем Англи интересĕсене ытларах та ытларах хĕсеççĕ. Шанхайа т. ыт. хăшпĕр хуласене тытса илнĕ хыççăн, Йапони командованийĕ Кантон çине тапăнма хатĕрленет. Кантона йарса илни Англи колонине—Гонконга економикă тĕлĕшĕнчен шăнтса лартать, Гонконг çине тўррем тапăнас хăрушлăх кăларса тăратать. Унтан Англин Лăпкă океанри çар бази çине—Сингапур çине тапăнасси те инçе мар.

Йапонецсен чăн-чăн планĕ ывăç тупанĕ çинчи пек курăна пуçласан, Англи консерваторĕсем урăхла калаçа пуçларĕç. Йапони агрессине хирĕç сăмахпа çеç хăмсарни нимĕн те памасть.

Йутçĕршыв ĕçсен министăрĕ Иден общинăсен палатинче нумай пулмасть çапла каланă:

„Пирĕн Инçет Хĕвелтухăçĕнчи интересĕсем пысăк, вĕсене ытти нацисен интересĕсемпе нийепле те танлаштарма май çук. Пирĕнтен мĕн килнине пурне те туса, епĕр çав интересене хўтлĕпĕр... Инçет Хĕвелтухăçĕнчи конфликт тĕлĕшпе епĕр Америкă Пĕрлешўлĕ Штачĕсен правителствипе таччăн çыхăнса ĕçлени пĕртен-пĕр килĕшўлĕ йен пулса тăрать“.

Лондон пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, Британин Гонконгри çарĕсем йалт хатĕр тăма приказ илнĕ. Гонконгра фортификацилĕ ĕççем пыраççĕ. Англи территорийĕ тавра йĕплĕ пралуксем караççĕ. „Стар“ хаçат, Англи правителстви виçĕ çар карап командирĕсене Китайа ишсе кайма хатĕр тăмашкăн приказ панă, тесе пĕлтерет.

Китайра Англин кăна мар, Америкă Пĕрлешўлĕ Штачĕсен те интерессем пысăк. Йапони вăрçи Америкă интересĕсене те хытă пырса çапать. Йапонецсем нимрен те именсе тăмаççĕ, чистăй урса кайнă пек хăтланаççĕ. Вĕсем Йанцзы йуханшывĕ çинче нумай пулмасть Америкă Пĕрлешўлĕ Штачĕсен „Пеней“ йатлă канонеркине персе путарчĕç.

Пĕрлешўлĕ Штатсен правителстви халиччен тĕнчерен уйрăм тăрас политикă тытса пынă пулсан, халĕ фашисла агрессорсен тискерлĕхĕ унăн куç-пуçне те уçать. „Пирĕн пўрт йал хыçĕнче, пирĕн çине часах вут сиксе ўкес çук“ тенипе ĕç тухмасть. Техникă ĕмринче океан та океан мар. Вăрçă вутти океан урлă та сиксе ўкме пултарать.

„Балтиморсен“ хаçатăн Вашингтонри корреспонденчĕ çапла çырать: „Йапонецсем Америкăн „Пеней“ канонеркине путарнă май Америкă лартнă требованисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе Йапони кутăнланма тытăнсан, Америкă Пĕрлешўлĕ Штачĕсем Лăпкă океанра çар демонстрацийĕ туса илме пултараççĕ. Правителствăна йертсе пыраканĕсем хушшинче çавăн пек сас-хура пур“.

Тинĕсри çар власĕсем Пĕрлешўлĕ Штатсен президентне Рузвелта „кирлĕ пулсан, Америкă флочĕ тинĕсре демонстраци тума хатĕр“, тесе пĕлтернĕ. Хăшпĕр вăтă офицерсем,—тет Йунайтед Пресс корреспонденчĕ,—Америкă флотне Филиппин утравĕсем патне йăма тата Сингапура „туслăн кайса килме“ кирлĕ тесе калаççĕ. Çавăн пек демонстраци Йапонийе тăна кĕртнĕ пулĕччĕ, тесе шутлаççĕ.

Америкă халăхĕ фашисла агрессорсене коллективлă отпор парассишĕн тăрать. Пичет те çавăн çинченех çырать. Чикаго хулинче тухса тăракан „Дейли нйус“ хаçат ,Пĕрлешўлĕ Штатсем çирĕп политикă тытса пынă пулсан, Йапони Китай çине тапăнас çукчĕ, тесе çырать. „Пĕрлешўлĕ Штатсем,—тет малала çав хаçатах,—вăрçăран хăтăлма хăтланса вăрçă пуçлама пулăшрĕç. Кайала чакнă кашни пусăм, кашни уступкă, кирек мĕнле чакни те—пулма пултаран конфликта пирĕн çыравсем хĕрне çеç çывхартать“.

Америкă халăхĕ хушшинчи шухăш-кăмăла палăртса, Скриппс—Говард пичечĕ çапла çырать:—Йапонецсем хăйсен провокацилĕ ĕçĕсене пăрахмасан, Америкă текех чăтса тăрас çук. Америкăпа Йапони хушшинче конфликт тухса кайас-мĕн пулсан, Йапонин пĕр Америкăна хирĕç кăна мар çапăçмала пулĕ. Мĕншĕн тесен Йапони агрессийĕ çавăн пекех Англине, Франçийе, Совет Сойузне тата Голландине хирĕç пырать.

Америкă Пĕрлешўлĕ Штачĕсен пысăк хулисенче Йапони таварĕсене бойкот тума чĕнекен массăлă демонстрацисем пулса иртеççĕ.

Англире те халăх массисем хушшинче Йапонине хирĕçле йухăм вăйлансах пырать. Коллективлă хăрушăсăрлăх идейи массăсене ытларах та ытларах хăй майлă çавăрать. Англин пĕр паллă журналĕнче майор Полсон-Нйумен çапла çырать: „Инçет Хĕвелтухăçĕнче, вырăссем хăйсен оборонине вăйлатнине пула, Йапони агрессийĕ кăнтăр йеннеле, Британи интересĕсем патнеле çавăрăнчĕ... Вăйсăр Российă Инçет Хĕвелтухăçĕнче миршăн хăрушлăх пулнă пулĕччĕ. Анчах кучухнехи Российă вăйсăр мар, Йапонине хирĕç тăма унăн ытлашшипех вăй çитет... Великобританипе Российăн интересĕсем халĕ пĕрпекрехех. Вĕсем иккĕш те миршĕн кĕрешеççĕ“.

Англи Инçет Хĕвелтухăçĕнче хăй тĕллĕн Йапонине хирĕç тăма пултараймасть. Хăй пĕччен хирĕç тăма унăн çар та, флот та çитмест. Тата çакна манма йурамасть: Итали Английе Вăтаçĕр тинĕсре хĕстерет, Германи Лондон çине тўррĕм тапăнассипе хăратса тăрать. Çавăн пек условисенче Англи хутне кĕме пултаракан хăватлă туссем çеç ăна çăлма пултараççĕ. Çав туссене вăл урăх ниçта та мар, Лига нацийĕнче кăна тупма пултарать. Анчах Англи çав çул çине çирĕп тухса тăман-ха, агрессорсемпе килĕшў тума майсем шырама пăрахман-ха.

Англи икĕ вăй хушшинче—мирпе вăрçă вăйĕсем хушшинче тытăнса тăрасшăн. Вăл Америкăна Лăпкă океанран хĕссе кăларасшăн. Çав вăхăтрах Йапонине хирĕç пĕр-пĕччен тăрса йуласран хăрать. Йапонипе Америкă килĕшў тăвассине хăвартлатас мар тесе, Пĕрлешўлĕ Штатсен хутне кĕме тăхтаса тăрать. Çав вăхăтрах, Пĕрлешўлĕ Штатсене пачах сухатас мар тесе, Йапонине вĕçне çити хута кĕресрен пăрăнма тăрăшать. Йапони хăйĕн агрессилĕ ĕçĕнче Англипе Америкă хушшинчи империалисăмлă хирĕçўсемпе усă курать.

Халĕ, Йапони агрессийĕ умĕнче, Англипе Америкă пĕр чĕлхепе калаçма тăрăшаççĕ, анчах сăмахран мĕнле те пулин пĕрлехи ĕçе куçни курăнмасть-ха. Пĕри те пуçарăва хăйĕн çине илесшĕн мар, пĕри мĕн тăвассине тепри кĕтсе тăрать.

Лăпкă океанра империалисăмлă хирĕçўсем çивĕчленнĕ çемĕн çивĕчленсе пыраççĕ. Океан вĕреме кĕрет. Йапони ,çăтакан кайăк пек, Китай территорин пысăк пайне çăвара персе чикнĕ. Унран çăварти татăка кăларса илме çăмăл пулас çук. Çавăн пекех Англи те, Америкă та Китайран хăйсен ирĕкĕпе тухса кайас çук. Унтан вара сăр пуçне тата Китай çине фашисла Германи хăйĕн йунлă аллине чăсать. Вăл, милитарисла Йапонипе вăрçăллă союзра тăрса, Йапонине хĕтĕклесе, ĕшкĕртсе тăрать.

Кирек мĕнле пулсан та çакна пĕр самантлăха та манма йурамасть: империалисăмла тискерсем хăйсен хирĕçĕвĕсене Китай шучĕпе, çавăн пекех тата Совет Сойузĕ шучĕпе татса хума хăтланасси те пулма пултарать. „Капиталисăмлă йĕркетавралăх, вăл—пуш сăмах мар, вăл чăнах та пур тата ыра мар йапала. Капиталисăмлă йĕри-тавралăх—вăл акă мĕне пĕлтерет: пĕр çĕршыв, хăйĕн патĕнче социалисăмла йĕркесем туса хунă Совет Сойузĕ пур, тата, унсăр пуçне, нумай çĕршывсем, халĕ те капиталисăмлă йĕркепе пурнакан, Совет Сойузĕ йĕри-тавра тăракан, ун çине тапăнма, ăна çĕмĕрсе тăкма йе, мĕн пулсан та— унăн хăватне хавшатма тата ăна вăйсăрлатма май кĕтсе тăракан буржуалă çĕршывсем пур“ (Сталин).

Китайри событисем малала мĕнле пырасси тата вĕсем мĕнпе пĕтесси, паллах, чи малтан Китай халăхĕнчен килет. 450 мĕлйунлă халăх пĕр шухăшпа, пĕр кăмăлпа, пĕр ирĕкпе—пусмăрлакана тапса сиктерес ĕмĕтпе пĕрлешсен, унăн тăван çĕршывне тапăнса кĕнĕ тăшмана хăваласа кăларма пултарать.

Китай халăхĕ Йапонине хирĕçле нацилле пĕрлĕх фронтне пĕтĕçесси кунран кун вăйланса пырать. Çав историлĕ пысăк ĕçе Китай коммунисĕсен партийĕ пуçарса йертсе пырать.

Йапони империалисăмĕ вăрçă пуçласа йама васкарĕ пулсан, унăн ĕнтĕ киле тавăрăнма йутра та ĕççем питех мар—ура айĕнчи çĕр чĕтрет. Йапони халăхĕ Китай халăхне тăшман мар, вăл пайăн марлин ырă хăйĕн тăванлă аллине Китайа пама пултарать. Ун чухне мĕн пуласси паллă вара.

Кино куракансем
„Ленин в Октябре" фиљм çинчен

Асран кайми кино

Епĕр, красноармейецсем, „Ленин в Октябре" картинăна курасшăн чылайранпа кĕтсе пурăнтăмăр. Йулашкинчен, кĕтнĕ кун тинех çитрĕ.

Пайан канмали кун. Курсантсемпе красноармейцсем часрах каç пуласса кĕтеççĕ: кинотеатрта „Ленин в Октябре" фиљм кăтартаççĕ. Вăхăт нумайах та иртмерĕ, казармăна старшина кĕчĕ те, кино курма кайасси çинчен пĕлтерсе строя тухса тăма хушрĕ.

Акă епĕр театрта. Çута сӳнчĕ те екран чĕрĕлсе кайрĕ.

... Петроград, революци сăпки. 1917 çулхи октăбĕр уйăхĕ. Тĕтрелĕ кĕр, урамсем шавлаççĕ, митингсем, салтаксем, матроссем, полицейскисем, йункерсем...

Çав вăхăтра Петрограда Финљандирен пойăс килет. Паровоз çинче машинистпа пĕрле Ленин. Владимир Илич кепкă тăхăннă, пĕрмайах чӳречерен пăхат̆. Хыçалтан пăхсан ăна паллама çук. Ленин хăйĕн пичĕпе кино куракансем йеннеле çавăрăнсан, театрти халăх шавлăн ала çупма пуçлат̆.

Пойăс чарăнсан, ăна полицейскисем хупăрласа илеççĕ, çав йытасем Ленина йарса тытасшăн. Анчах Ленин паровозпа кайса Петрограда анса йулат̆.

Владимир Илийч чи малтанах Сталин йулташпа курса калаçат̆. Вăл парти Тĕпкомĕн ларуне пухат̆. Унта: Сталин, Свердлов, Дзержинский, Урицкий, йулташсем. Ленин хĕçпăшаллă восстани çинчен калат̆. Тĕпком хĕçпăшаллă восстани тума йышăнат̆. Анчах троцкисла-зиновйевла, каменевла-бухаринла бандăсем Тĕпкомăн вăрттăн решенине буржуазине пĕлтереççĕ. Çаканшăн Вăхăтлăх правителствă Каменевпа Зиновйева тав тăват̆, Ленинпа Сталина вĕлерме тата революцине путарса лартма хатĕрленет.

Каменевпа Зиновйевăн сутăнчăкла, штрейкбрехерла ĕçĕ çинчен пĕлсен Ленин çав тери тарăхса кайат̆.

Массă бољшевиксем майлă тăрат̆. Ленинпа Сталин йертсе пынипе рабочисемпе салтаксем хăçпăшаллă восстани туса Вăхăтлăх правителствăна сирпĕтсе антараççĕ. Российра Социалисăмлă Аслă революци пулса тăрат̆.

„Ленин в Октябре" картинă ĕмĕрте те асран кайас çук.

Епĕр, красноармейецсем, çак кинона курнă хыççăн Октăберте çĕнсе илнисене тата хытăрах сыхлама сăмах паратпăр.

Красноармеец П. Тарасов.

Тамбов хули

Аслă Ленинăн образĕ пурне те хумхантарат̆

Шупашкарти кинотеатрта темиçе кун хушши ĕнтĕ „Ленин в Октябре" йатлă историлĕ фиљм пырат̆. Кунне 4-шер сеанс пулат̆ пулсан та, халăх кашни кунах нумай пухăнат̆. Пурте çĕнĕ пурнăçăн ĕмĕрĕ мĕнле пуçланса кайнине, унăн çĕнтерĕвне организацилекен аслă Ленина курма тăрăшаççĕ.

Епĕ хам та 2—3 кун ăшалаиса çӳренĕ хыççăн, театра лексен мĕнпек савăннине сăмахпа та каласа параймастăп. Курса ларакансем пурте ман пекех савăнса пăхса ларатăн. Йулашкинчен залра çута сӳнчĕ. Мĕн пур тимлĕх екран çине кусрĕ. Екран çинче пойăс килни курăнчĕ. Курса ларакансенчен нумайăшĕ ала çупа пуçларĕç.

— Мĕнĕн ала çупаççĕ вара, Ленин курăнмарĕçке,—ыйтат̆ манран йунашар ларакан пĕр ватă карчăк.

— Октябер революцине тума Ленин çак пойăспа килет,—ăнлантаратăп епĕ карчăка. Вăл малала итлемерĕ те мана, хытăн ала çупа пуçларĕ.

Пойăс патне салтаксем чупса пынине курсан, карчăк каллех хăмăлсăрланчĕ:—Ах, хăйаматсем, Ленина тытаççĕ ĕнтĕ,—тесе ларат̆. Пойăс салтаксем патĕнчен хытăн иртсе кайсан, пĕчĕк ача пек çĕкленсе карĕ вăл:

— Хăтăлчĕ, хăтăлчĕ, — тет.

Сеанс пĕтиччĕнех зал ала çупнине йанраса тăчĕ. Ленин хăйне питĕ типтерлĕн тытни, рабочисемпе çав тĕри çывăх пурăнни, хăйне нихăçан та мăнна хуманни, революци тăвассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлени пурне те тĕлĕнтерет.

Пойăс çинчен ансанах вăл хăйĕн çывăх йулташĕсемпе — Сталинпа, Свердловпа, Дзержинскипе тата ыттисемпе курса калаçма васкат̆. Вăл вĕсемпе революци планне сӳтсе йават̆.

Керенски пуçпулса тăракан Вăхăтлăх правителствă рабочи класăн тата пĕтĕм çĕршывсен аслă çулпуççисене — Ленинпа Сталина вĕлерме хăваларнă. Предател Каменевпа бољшевиксен революци планне Вăхăтлăх правителствăна пĕлтерсен, залра ларакансен чĕрисем пысăк çилĕпе тулчĕç.

— Ех, ирсĕр!—теççĕ.

Вăхăтлăх правителствăн лидерĕсем шăлĕсене тем пек хăйăрарĕç пулсан та, Ленинпа Сталина вĕлерейменнерĕç, революцине те пусараймарĕç. Нумай вăхăт капланнă революци вăйлă йухăмĕ пĕтĕм Ленинград хулине хуплаçа илчĕ. Револуци тискер пусмăра ура айне турĕ.

Ку фиљмăна пăхнă чухне пĕре те кинокартинăна пăхнă пек туйăнмаст. Урамра пыракан колоннăна тăрса, тăшмансемпе çапăçма кайас килсе тăрат̆. Пĕр вĕсемсĕр пăхас килет. Вăл сана кĕрешӳве çĕклет. Чĕре çулăмланат̆. Хаљ тесен хаљ алла хĕçпăшал тытса, пирĕн çĕршыва хирĕç вăрçă хатĕрлекен тискер фашиссемпе çапăçма сиксе тăрас килет.

Усли Васлейĕ.

Коллективлăн кайса куртăмăр

Чăвашсен йалхуçалăх коммунисла аслă шкулĕнче вĕренекен студентсем пĕтĕмпе 40 çын декабĕрĕн 26-мĕшĕнче „Ленин в Октябре" йатлă фиљм кайса курчĕç.

Ку фиљм совет кинематографийĕн чăннипех чаплă çĕнтерӳ пулат̆. Картинă 1917 çулхи Октăбер кунĕсене кăтартса парат̆. Халăх артисĕ Шчукин Ленин рољне питĕ чаплă выљат̆. Кино курнă чухне хăвна ху пĕрре те театрта ларнă пек туймастăн, пĕтĕм шухăштуйăм Петроградри событисем хыççăн пырат̆, Ленинпа пĕрле çӳрет.

Владимир Илийча халăх çав тери йуратнă. Тăшмансем ăна кураймасăр, вĕлерессишĕн пулнă. Рабочи Василий Ленин пурнăçне куç шăрçине сыхланă пек сыхлат̆, шофер Ленина çăлса хăварасшăн хăй вилет. Çак картинăсем пĕтĕм чуна хумхантараççĕ. Пирĕн хамăр йуратнă çулпуççене çавăн пек сыхламала та ĕнтĕ.

„Ленин в Октябре" фиљм пире хамăрăн тăван çĕршыва йуратма, тăшмансем çине вăйлă кураймалăхпа тарăхма вĕрентет.

Революци тума çамăл пулман, ĕççыннисен йунĕ нумай йухнă.

Ленин вилнĕ, анчах унăн ĕçĕ пурăнат̆ тата пĕтĕм тĕнчипе çĕнтерсе пырат̆. Хамăрăн социалисăмла тăван çĕршыва хытăрах сыхлар, халăх тăшманĕсене урнă йытăсене вĕлерсе пĕтернĕ пек пĕтĕмпех пĕтерер.

Г. Иванов.

Татах курас килет

„Ленин в Октябре" кинокартинăна пăхнă чухне рабочисем мĕнле пысăк хастарлăхпа революцишĕн кĕрешнине куратăн. Епĕ чи çывăх йуратнă çулпуççсем Ленинпа Сталинăн кашни утăмне пĕр сиктермесĕр тинкерсе пăхрăм. Вĕсен сăмахĕсене пысăк тимлĕхпе итлерĕм. Ленинпа Сталин жандармăсем хыттăн сыхланине пăхмасăр пĕтĕм ĕççыннисен ĕмĕчĕсене пурнăçлă тăвакан революцишĕн вăй-халне шеллемесĕр ĕçленĕ. Вĕсем хăйсем тавра рабочисен массине пĕтĕçтерсе буржуазисен влаçне ĕмĕрлĕхех çапса аркатаççĕ.

„Ленин в Октябре" кинокартинăна курни мана вăрçă чухнехи кунсене аса илтерет. Епĕ хам Октăбер кунĕсенче хĕрлĕгвардейец пулса тăшман çарĕсене хирĕç мĕнле кĕрешнине тата та тепĕр хут тишкерсе тухрăм. Анчах манăн Ленин сăн-сăпатне вĕçĕмсĕр курас килет. „Ленин в Октябре" картинă пек кăмăла çĕклентерекен, хĕрӳлĕн ĕçлеме вăй паракан кинокартинăсене татах та курас килет.

Типографинчи рабочи, Сафонов.

Чăнлăха кăтартнă

„Ленин в Октябре" кинокартинăн содержанийĕ кăмăла пысăккăн çĕклентерет. Аслă та çывăх çулпуççсем Ленинпа Сталин йертсе пынипе вăйланса пынă рабочисен революцилĕ йухăмĕн чăнлăхне илемлетсе кăтартса пани лайăхран та лайăхрах ĕçлес кăмăла çĕклет. Ку кинокартинăна курнă хыççăн, пĕтĕм шăм-шак тулли вăйпа вĕреме тытăнат̆. Хамăрăн тăван, хаклă телейлĕ çĕршывшăн кĕрешме епĕ кирек-хăçан та хатĕр.

Зеленцов.

Испанири фронтсенче

Ӳкерчĕк çинче: республика çарĕн свйазисĕсем.

(Сойузфото).

Китайри вăрçă

Тĕп фронтра Йапони çарĕсем хаљ те Ханчжоу çине тапăнаççĕ (Нинцзйан провинцин тĕп хули Шанхайран кăнтăр йенерех). Китай хаçачĕсем хулара пулнă ларутăру çинчен пĕлтернисене илсе кăтартаççĕ. Цзяңтан йуханшывне хупса питĕрсе лартнă. Китай çарĕсем пристаньсене, електростанцине, шыв пăркине çĕмĕрсе тăкнă. Декабĕрĕн 24-мĕшĕнче Ханчжоуран йулашки пойăс тухнă. Хула пушанса йулнă. Магазинсенчи тата складсенчи таварсене илсе тухса кайнă. Пурăнмали çуртсене хупнă. Урамсенче баррикадăсем тунă. Хаљхи вăхăтра Йапони атакисем Линьпин çинче (Дзйасин-Ханчжоу чукунçулĕ çинчи станци) пулаççĕ. Ку участкăра Китай çарĕсем Йапони çарĕсен икĕ атакине сирсе пăрахнă. (ТАСС).

Гибралтар çывăхĕнче совет пароходне тытса чарнă

Францин Гавас агенстви пĕлтернĕ тăрăх, Гибралтар çывăхĕнче пулнă Совет Сойузĕн „Щорс" йатлă грузовой пароходĕ хăйне тытса чарса Сеутăна илсе кайни çинчен декабĕрĕн 23-мĕшĕнче радиопа пĕлтернĕ.

(ТАСС).

Сталин йулташ сăмах каланине ӳкернĕ документлă фиљм

Мускав хулинчи Сталинский суйлав округĕнчи суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухувĕнче, Пысăк театрта, 1937 çулхи декабĕрĕн 11-мĕшĕнче Сталин йулташ сăмах каланине Сойузкинохроникăн Мускаври студийĕ кинопљонкă çине ӳкерсе илнĕ.

Çак фиљма хаљ туса пĕтернĕ ĕнтĕ.

Декабĕрĕн 26-мĕшĕнче фиљма ушкăнпа пухăнса пăхнă. Пухува пынисем хаклă кăтартусем чылай панă. Çак кунсенче фиљма нумай екземпљарпа туса кăларса, ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн сеççийĕ уçăлнă тĕле пĕтĕм çĕршывра кăтартма пуçлаççĕ.

(ТАСС).

Ăçлăлăх работникĕсем колхозсенче

** Краснодарти ăслăлăх работникĕсемпе аслă шкул работникĕсен профсойуз членĕсем Краснодар крайĕнчи колхозсенче пĕрремĕш „ăслăлăх кунĕ" туса иртернĕ. Йала 60 лектор тухса кайнă. Колхозсенче: „Çĕр çинче пурнăç пуçланни", „Çурçĕр полюсне çĕнсе илни", „Раштав праçникĕсем пуçланни тата вĕсем клас тĕлĕшĕпе мĕнле вырăн йышăнса тăраççĕ" тата ытти лекцисене те вуланă.

Кружоксем лайăх ĕçлеççĕ

ЕЛĔК. Илпешри „Йалав" колхозăн драмă кружокĕнче 16 çын тăрат̆. Кружок çак хĕлте „Тăшман çывăрмаст̆", „Улшăннă самана" пйесăсем тата тĕрлĕ инсценировкăсем лартса пачĕ.

Кунсăр пуçне, колхозра хор кружокĕ ĕçлет. Кружока Иванова Марийа йертсе пырат̆. Хор кружокĕ ку тарана çитсе „Песня о родине", „Рябинушка", „Красноармейская" тата ытти йурăсене йурлама вĕренчĕ. Кружокра 21 çын тăрат̆.

Й. Прокопйев.

ТЕМТЕПĔР

Морозов фабрикант расхочĕсем

Калининскри историлĕ музейĕн ăслăлăх сотрудникĕсем ĕлĕкхи „Тверскăри мануфактурă Товарищчествин" архив фондĕнче интереслă документ—çав „Товарищчествăн" директорĕ пулнă М. А. Морозов фабрикант хăйĕн расхучĕсем çинчен çырса пынă тетрат̆ тупнă.

Морозов фабрикантăн çиме вањњи çулталăкра 9.889 тенкĕ те 10 пус тухнă. Кунсăр пуçне, ерех вањњи 12.008 тен. 15 пус расхутланă. Лашасем илме Морозов çулталăкра 5.400 тенкĕ, йутçĕршывсенче çӳресе—18.364 тен. 05 пус расхут кăларнă.

1901 çулта Морозов фабрикант хăй вањњи пурĕ 196.657 тен. 49 пус расхут кăларнă. Морозов директор пулса ĕçленĕ „Тверскри мануфактурă Товарищчествинче" 1.035 рабочи пĕрле çавăн чухлĕ çеç ĕçукçи илнĕ.

(„Ленинградская правда").

Ăслăлăхсен академин филиалĕ колхозра

Тамбовск районĕнчи „Красный орден" колхозра (Инçет-Хĕвелтухăç) Ăслăлăхсен академин филиалне организацилеççĕ. Ăслăлăх сотрудникĕ Данилов йулташ кăçал çак колхозра тĕрлĕ курăк вăрлăхĕсен коллекцине пухас тĕлĕшпе ĕçленĕ, тата колхозниксем пулăшнипе çав вырăнта ӳсекен тимофейевкă, клевер, данник вăрлăхĕсене т. ыт. те нумай пухнă.

Данилов йулташ пуринчен ытла клевера хаклă тесе шутлат̆, ăна сăтăрçăсем Инçет-Хĕвелтухăçĕнче çитĕнмест тесе шутланă. Данилов йулташ çак питĕ хаклă кућтурăна часах пĕтĕм крайĕпе акса тума пуçлĕç тесе шутлат̆.

Колхозниксем филиала питĕ пулăшаççĕ. Вĕсем хаклă кућтурăсене ӳстерме 6 гектар çĕр уйăрса панă.

(„Тихоокеанская звезда").

Икĕ мамонт скелечĕ тупнă

Камское Устйе йалĕнче, Атăлăн сылтăм çыранĕ хĕрĕнче, мунча лартмали вырăнта шăтăк алтнă чух, 1,5 метр тарăнĕшĕнче мамонт шăлне тупнă. Рабочисем ун çинчен районри организацисене тата Хусанти государствă университетне пĕлтернĕ.

Çав вырăна чавса пăхсан 3,80 метр тарăнĕшĕнче мамонт шăммисене тупнă: икĕ пуç шăмми, таз шăммисем иккĕ, ура шăммисем тата чĕлхе айĕнчи шăмă. Чĕлхе айĕнчи шăмă халиччен сайра вырăнта çеç тупăнкаланă. Çакнашкал мамонт шăммине (пĕр мамонтăнне) пĕтĕмĕшпех Тутар республикинче пĕрремĕш хут тупнă. 1938 çулхи çуркунне иккĕмĕш мамонт скелетне чавса пăхма шутлаççĕ.

(„Красная татария").

КĔСКЕН

Васкассинчи (Елĕк р.) Илийч йачĕпе тăракан колхозра радио лартрĕç. Колхозниксем колхоз клубне кашни каçах радио итлеме пухăнаççĕ.

Çак кунсенче „Строитель" колхоз членĕсем (Вăрнар р-нĕ) „Оборонăна тĕреклетмели зайом" укçине 100 процентчĕпех тӳлесе татрĕç.

Колхоз тăшманĕсене ответ тыттараççĕ

Мартынкăри „Хĕрлĕ хĕвелтухăç" (Трак р.) колхозра 1933 çулта колхоз председателĕнче ĕçленĕ сăтăрçă, растратчик Горшков Васили—судпа айăпланнăскер, тĕрмерен таварăнсанах хăйĕн çывăх йулташĕсем пулăшнипе сысна фермин пуçлăхне кĕрсе вырнаçнă. Çапла вара Горшков хăйĕн сăтăрла ĕçне пурнăçа кĕртме тытăнат̆. Вăл сыснасене тăрантармалла панă çăнăха вăрттăн сутса ерех ĕçсе çӳрет. Фермăран хăйне валљи 3 сысна çӳрине вăрласа кайнă. Вăл хăйсен хуранташĕсене фермăри сысна çурисемпе парнеленĕ. Фермăра хăйĕн кăвакалĕсене тăрантарса усрат̆. Çапла сăтăрла ĕç тунипе кăçал 85 пуç сысна выçса вилчĕ.

Горшковăн килĕнче çимели пĕтсен:—вăл фермăран сыснасене тăрантармалли çăнăха вăрласа пурăннă. Çакна правленинче ĕçлекенсем лайăх пĕлеççĕ пулин те, нимĕн те шарламаççĕ. Правленинче ĕçлекен пуçлăхсем Горшковпа пĕр урапа çине ларса колхоз хуçалăхне çаратас, йухăнтарас çул çине тăчĕç. Кунта критикăпа самокритикăна хĕстерсе ларнă.

Колхозниксен аслă пухувĕ пулсан пĕрмайах „штатный секретар" — Семенов Алексейа лартаççĕ.

Çак штатлă секретар правлени ĕçне критиклекенсем тухса каланисене протокол çине нимĕн те çырмаст̆. Семенов Алексейах колхозăн кладовщикĕ. Вăл склатран колхозниксем куриччен тырă сутат̆. Колхозниксене ĕçкунĕ тăрăх тырă валеçнĕ чух çӳп-çап, йе хăйăр хутăштарса парат̆.

Иртнĕ çулта 500 пăт çĕрулмине çĕртсе йарса фермăри сыснасене çитерттерсе нумай сысна амисем çурă пăрахнă.

Кунти сăтăрла ĕçсене каласа та пĕтерес çук. Çак сăтăрçăсене тăрă шыв çине кăлармала, „Чăваш Коммунĕ" хаçат редакцинчен пулăшу ыйтатпăр, тесе çырса пĕлтерчĕç колхозниксем.

„Чăваш Коммунĕ" хаçат редакцийĕ заметкăна Трак ПСК(б) Парти райкомне вырăна тухса тĕрĕслеме йаначчĕ.

Халĕ парти райкомĕ вырăна тухса тĕрĕсленĕ хыççăн заметкăра кăтартнисем тĕрĕс пулнă, Горшков ферма пуçлăхĕнче ĕçленĕ вăхăтра 119 пуç сысна вĕлернĕ, 6 çурă тата 1 сысна аçи варлана. Малтанхи колхоз счетоводĕ Николайев—530 тенкĕ колхоз укçине хăйсем сумне чикнĕ.

Халĕ айăплисене ответ тытарма ĕçе следстви органне панă, тесе пĕлтерчĕ Трак ПСК(б) Парти райкомĕ.

Хроника

** ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ С. Н. Торопченов йулташа ССР Сойузĕн Çулйĕр Халăх Комиссарĕн пĕрремĕш заместителне çирĕплетнĕ.

** ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ А. Ф. Кухаркин йулташа ССР Сойузĕн Çулйĕр Халăх Комиссарĕн заместителне çирĕплетнĕ.

** ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ И. С. Картенев йулташа ССР Сойузĕн Çулйĕр Халăх Комиссарĕн заместителне çирĕплетнĕ.

(ТАСС).

Ответлă редактăр заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

ВРАЧСЕНЕ, СЫВЛĂХ СИПЛЕКЕН УЧРЕЖДЕНИСЕНЕ, АЧАСЕМПЕ ХĔРАРĂМСЕН КОНСУЉТАЦИЙĔСЕНЕ

ПĔЛСЕ ТĂМА

Пур аптексенче тата „САНГИГИЕНĂ" магазинĕсенче

РАХИТА ХИРĔÇ „Д" ВИТАМИН сутлăх пур

Витамин „Д" ачасене рахит пуласссинчен хăтарат̆;

Витамин „Д" ачасене рахитран хăвăрт сывалма пулăшат̆;

Витамин „Д" ачасене те çитĕннисене те шăмă тавраш хуçăлнине хăвăрт сыпăнма пулăшат̆;

Витамин „Д" йăварланнă хĕрарăмсен тата кăкăр ĕмĕртекен ача амăшсен организмĕнче тăвар улшăнуне çăмăллатат̆;

Витамин „Д" çынăн организмĕнче пулса пыракан фосфорла-каљцилĕ улшăнуне йĕркелет.

ВИТАМИН „Д" препаратăн кашни серине ССР Сойузĕн Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕн Государствă витамин станцинче биологи тĕлĕшĕнчен сăнаса тĕрĕслесе кăлараççĕ.

Чăвашаптекоуправленин мĕн пур аптекĕсенче тата „Сангигийенă" магазинĕсенче Витамин „Д" ыйтăр

2—1

Чăвашсен йалхуçалăх ИНСТИТУЧĔ

Института вĕренме кĕме хатĕрлемелли курссене уçас пирки решенийе ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ çумĕнчи Шкулсен Тĕп Управленийĕ улăштармала тунă, çавăнпа та курса вĕренме илмеççĕ.

ДИРЕКЦИ.

3—1

Чăваш АССР Халăх Хуçалăх Учочĕн Управленине МАШИНИСТКА КИРЛĔ

Çак адреспе пымала: Канашская урам, 18. Халăх Хуçалăх Учочĕн Управленийĕ.

Чăвашснабсбытăн транспорт кантурĕ

Чăваш АСС Республикинчи пур автохуçалăхсене те ПĔЛТЕРЕТ

1937 çулхи декабĕрĕн 27-мĕшĕнчен пуçласа 31-мĕшĕчен пур автохуçалăхсен те 1938 çулта çунтармалипе сĕрмелли йапаласене илмели кивĕ талонсемпе нарйадсене улăштармала.

1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшĕнчен кивĕ талонсем пăрахăçа тухаççĕ, вĕсемпе бензин памаççĕ.

1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшĕпе 10-мĕшĕ хушшинче кивĕ талонсемпе çунтармали йапала илес вырăнне укçан çеç илме пулат̆. 1938 çулхи йанварĕн 10-мĕшĕ иртсен кивĕ талонсем ниме йурăхсăр пулса йулаççĕ, вĕсем пирки вара транспорт кантурĕ нимĕнле претензи те йышăнмаст̆. 1938 çулта бензоколонкăран бензин илекен автохуçалăхсен кун пирки йанварĕн 15-мĕшĕчен (1938 çул) транспорт кантурĕпе договор тумала.

Чăвашснабсбытăн транспорт кантурĕ.

1937 çулхи декабĕрĕн 26-мĕшĕнчен пуçласа

Чăваш АСС Республикинчи кино театрсен екранĕсем çинче

Саслă, илемлĕ, историлĕ-революцилĕ пысăк фиљм

„ЛЕНИН в ОКТЯБРЕ"

кăтартаççĕ

„Мосфиљм" киностудийĕ тунă.

Сценарий авторĕ *А. КАПЛЕР.*

Тĕп роље ССР Сойузĕн Халăх артисĕ Б. В. ШЧУКИН выљат̆.

Вырăнсенчи кино-театрсенче хăçан кăтартассине хаçатсем çинче тата радио тăрăх пĕлтернине асăрхăр!

Росснабфиљм трестăн Чăваш кантурĕ.

„Чăваш Коммунĕ" çыранса илмели хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 993. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2601. Тираж 13780.